Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ÇЕНТАБЕР 26
ТУНТИКУН
222(5035) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ

Пер №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, ред. заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—0—85, йалхуçалăх пайĕн—4—97, советсен пайĕн—0—83, промышлĕннăç пайĕн—7—97, йалкорсен пайĕн—2—30, дежурнайĕн—6—23.

Чăваш парторганизацийĕн XIX-мĕш конференцийĕ

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн пĕрремĕш çекретарĕн ĕçĕсене тăваканĕ А. А. Волкăв йулташ Чăваш парторганизацин XIX-мĕш конференцине уçнă чухне 1938 çулти çенťаберĕн 24-мĕшĕнче каланă сăмах

Йулташсем! Пирĕн Ленинăн—Сталинăн пĕтĕм аслă, мухтавлă партийĕ, пирĕн пĕтĕм парторганизацисем, çавăн пекех пирĕн Чăваш парторганизаци те, отчотпа суйлав пухăвĕсем, конференцисем ирттерчĕç. Вăл пухусемпе конференцисенче ПСК(б)П Тĕпкомĕн февраљ-мартри пленумĕнче пирĕн аслă учителĕ, Ленин ĕçĕсене малала илсе пыракан, халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташ тунă докладпа унăн йулашки сăмахĕ тăрăх йышăннă историлĕ решенисене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе тунă ĕçсем çинчен отчотсем итленĕ. (НУМАЙЧЧЕН АЛĂ ÇУПАÇÇĔ, ПУРТЕ УРА ÇИНЕ ТĂРАÇÇĔ. „ИНТЕРНАЦИОНАЛ").

Есĕр пĕлетĕр, йулташсем, ПСК(б)П Тĕпкомĕн çак пленумĕнче парти ĕçĕнчи çитменлĕхсемпе троцкисла тата ытти йышши двурушниксене пĕтермели майсем çинчен Сталин йулташ доклад тунă. Кун хыççăн пирĕн партин пурнăçĕнче паллă вырăн йышăнса тăракан тепĕр решени пулчĕ — вăл ПСК(б)П Тĕпкомĕн 1938 çулти йанварти пленум решенийĕ.

Çак паллă решенисемпе Сталин йулташ кăтартăвĕсем çак отчотлă тапхăр хушшинче пирĕн партин пĕтĕм ĕçĕнче, çавăн пекех чăваш бољшевикĕсен ĕçĕнче те, тĕп вырăнта тăнă. Çапла ĕнтĕ ПСК(б)П Тĕпкомĕн февраљ-мартри пленум решенисемпе Сталин йулташ кăтартăвĕсене пурнăçа кĕртес задачă Чăваш республикĕнчи бољшевиксене, партин кашни организацине хамăр ретсене троцкисла-бухаринла, буржуалă-националисла елементсенчен, халăхăн ылханлă тăшманĕсенчен, фашисла агĕнтсенчен тасатас йенĕпе çине тăрса кĕрешме хушнă.

Çакăнпа пĕрлех, ПСК(б)П Тĕпкомĕпе Сталин йулташ партин йертсе пыракан органĕсене бољшевикла, тĕрĕсленнĕ кадрсемпе тĕреклетес йенĕпе пысăк ĕçсем туса ирттерме кирли çинчен задач кăларса тăратрĕç.

Йулташсем, пирĕн парти ПСК(б)П Тĕпкомĕ тата халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташ йертсе пынипе, пирĕн чаплă чекиссем, пирĕн чаплă совет разведки, тĕрĕс сталинĕç, Ленин-Сталин партийĕн воспитанникĕ Н. И. Йежов йертсе пынипе, фашисла троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла йăвасене çĕмĕрсе тăкрĕ, хамăр ретсене, парти, совет, хуçалăх аппарачĕсене çакнашкал сволăчсенчен—ирсĕр шпионсенчен, диверсантсенчен, террориссенчен, двурушниксенчен тасатас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттерчĕ.

Чăваш парторганизаци те тăшмансене—Токсинсене, Петровсене, Зефирăвсене, Андрейевсене, Ваструкансене, — çак елменĕвĕçсене, троцкисла-бухаринла буржуалă националиссене çĕмĕрсе тăкас йенĕпе пысăк ĕçсем туса ирттерчĕ. Çак тăшмансем партипе совет, хуçалăх аппарачĕсене йертсе пыракан вырăнсене йышăнса, хăйсен хуçисем—фашиссем хушнипе икĕпитленсе сутăнчăклă, ирсĕр, сăтăрлă ĕçсем туса пынă. Елменĕвĕçсем чăвашсене вырăс халăхне кураймин пулма вĕрентнĕ: „Чăвашсен вырăс çыннисен, ытти халăх çыннисен хĕрĕсене качча илмеле мар", тесе вĕрентнĕ. Çак фашиссем халăхсене пĕрпĕринпе хирĕçтерсе йарасшăн пулнă.

Анчах ĕçсем тăшмансем, çĕрĕк кулĕри лăплапсем шутланă пек пулмарĕç, пулас та çук. ПСК(б)П Тĕпкомĕ тата Сталин йулташ хăй йертсе пынипе çак çĕленкалтасене пĕтерне. (НУМАЙЧЧЕН АЛĂ ÇУПАÇÇĔ.)

Йулташсем, пирĕн кунта, облăçри партконференцире, лайăххах пăхса тухмала: епĕр тăшмансене кăкласа кăларас тĕлĕшпе, сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе çителĕклĕ таран кĕрешнĕ-и, сталинла хайар критикăпа самокритикăна çителĕклĕ таран сарса йанă-и?

Ку ыйтăва хирĕç çапла ответ памала пулать: тăшмансене тупса палăртас йенĕпе те, вĕсен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене пĕтерес йенĕпе те çителĕклĕ таран кĕрешмен. Çакна облăçри конференци умĕн районсенче иртнĕ парти пухăвĕсенче те, ПСК(б)П Шупашкар хула организацин конференцинче те, ПСК(б)П Обком пленумĕнче те уçса палăртнă фактсем лайăх кăтартса параççĕ.

Хулари парти конференципе ПСК(б)П Обком пленумĕ критикăпа самокритикăна чăннипех бољшевикла сарăлнипе иртрĕç. Хула комитечĕпе Обком тата Иванов тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе татăклăн кĕрешменшĕн, хула комитечĕпе Обком çекретарĕ пулнă Иванова политиклă йенчен шанăçсăр çын вырăнне хурса решени йышăннă. Иванов сăтăрла ĕçсен йулашкисене хирĕç кĕрешмен çеç мар, вăл тăшмансене хутĕлесе пурăннă, вĕсен ĕçĕсене пĕтерсе лартнă, тата та ытларах—тăшманла елементсене наркоматсенче т. ыт. çĕрте ответлă вырăнсене лартса пынă.

Иванов хулари партконференцире пĕтĕм çивĕчлĕхпе лартнă ыйтусене, демагогиле тухса каланипе, кунта „пурне те ман çине тийеççĕ" тенипе шăлса лартма пăхрĕ. Обком пленумĕнче фактсемпе хĕстерсе çитернĕ хыççăн хăйех: „Кунта тухса каланисемпе пуринпе те килĕшетĕп", тет. Çакна мĕнле квалификацилеме пулать-ха? Иванов партине улталанă, икĕпитленсе ĕçленĕ, критикăпа самокритикăна хĕстернĕ, троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла тăшмансен блокне хутĕленĕ.

Çавăнпа та пирĕн партин Тĕп Комитечĕ облăçри парторганизацине пухас срука тепĕр вăхăта хăвармала туни питех те тĕрĕс пулнă. Тĕпком аллинче Обком руководствинче ĕçсем йĕркелех тăманни çинчен, Иванов Тĕпком умĕнче хăйĕн айăплă ĕçĕсене пытарса тăни çинчен калакан, ăна политикă йенчен текех ĕненме çукки çинчен калакан фактсем пулнă.

Çавăн пекех, Тĕп Комитет облăçри партконференцине пухас умĕн малтан районсенче пухусемпе конференцисем ирттермеле туни те питех те тĕрĕс, мĕншĕн тесен, пĕрремĕшĕнчен, отчотпа суйлав пухăвĕсемпе конференцисем пулнăранпа чылай вăхăт иртнĕ пулнă, тепĕр йенчен, çакăн пек туни—критикăпа самокритикăна сарса йани тăрăх руководствăри, çавăн пекех сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерессипе тăшмансене тупса палăртас ĕçри çитменлĕхсене тата ытларах палăртма пулăшнă.

Пирĕн умра, йулташсем, питех те пысăк задачăсем тăраççĕ: пирĕн пур çитменлĕхсене те халех тӳрлетмеле, халех пурне те ура çине тăратмала, халех пурне те мобилизацилемеле. Çаксене пурне те парти организацисен тумала пулать. Парти членĕсене, пирĕн мухтавлă комсомола, рабочисене, колхозниксене, интеллигенцине, пĕтĕм ĕççыннисене умра тăракан политикăлă-хуçалăхлă задачăсене пурнăçлассишĕн кĕрешме мобилизацилес тесен, пирĕн, йулташсем, çине тăрса хыттăн ĕçлемеле пулать.

Йулташсем, аслă Сталин капиталисăмла йĕритавралăх çинчен вĕрентнине манма йурамасть. Пăхăр-ха мĕнле ĕçсем пулса пыраççĕ капиталисăмлă çĕршывсенче? Фашиссем урса кайсах Совет Сойузне хирĕç вăрça хатĕрленеççĕ. Вĕсем уйрăм çĕршывсене çавăрса илеççĕ, интервенци тăваççĕ. т. ыт. те.

Есĕр пирĕн мухтавлă нарком Литвинăв йулташ Лигă нацинче тухса каланине вуланă пулĕ, тетĕп. Литвинăв йулташ Женеври трибунă çинчен пĕтĕм тĕнче умĕнче пирĕн çĕршывăн вăйхăвачĕ çинчен асăрхатарчĕ. Аслă Сталин йертсе пыракан аслă Совет Сойуз халăхĕн, пирĕн сойузлă тăван республикăсен, автономлă республикăсен, пирĕн нумай нацилĕ, 170 мĕлйунлă халăхăн тăван, йуратакан, никам çĕнтерейми хăватлă çар пур, вăл çарăн, Климент Йефремăвич Ворошилăв йулташ йертсе пынипе тăшмансене ăçтан килнĕ, çавăнтах çĕмĕрсе тăкма вăй çителĕклĕ. (ТĂВĂЛЛĂН АЛĂ ÇУПАÇÇĔ).

Йулташсем, пирĕн парти, пирĕн правителствă мирлĕ политикăшăн кĕрешнĕ, кĕрешеççĕ те. Çавăнпа та пирĕн аслă тăван çĕршыв—Советлă Социалисăмлă Республикăсен Сойузĕ—социалисăм çĕнтерĕвĕсем çинчен пĕтĕм тĕнче умĕнче хăйулăн калама пултарать.

Социалисăм пирĕн çĕршывра пурнăç йăлине кĕчĕ. Çакăн çинчен пирĕн саманари чи паха документ—Сталинла Конституци калать, çакăн çинчен хаçатсем çинче пичетлесе кăларнă „ПСК(б)П историн Кĕске курсĕ" калать.

Йулташсем, пирĕн хамăрăн Ленин — Сталин парти членĕн аслă йатне тивĕçлĕ пулас тесен, умра тăракан пур задачăсене те пурнăçлас тесен, хамăрăн социалисăмлă тăван çĕршыва тата хытăрах сыхлас тесен, тăшмана пĕтĕмпех пĕтерес тесен, сăтăрла ĕçсен йулашкисене халех пĕтерес тесен, пирĕн Ленин—Сталин аслă партийĕн çакă историле, документсене тивĕçлипе вĕренес пулать.

Çак документсем вĕсем, йулташсем, Маркс—Енгĕлс—Ленин—Сталин вĕрентĕвĕсен теорилĕ хĕçпăшалĕ, вăл документсем пире коммунисăмшăн кĕрешме хĕçпăшаллантараççĕ. Çак документсем вĕсем пирĕн партипе вырăс рабочи класĕ социалисăмшăн кĕрешсе утса тухнă чаплă çула кăтартса тăраççĕ. Вĕсем коммунисăмшăн, коммунисăм обшчĕствишĕн кĕрешмели малашнехи çула кăтартса параççĕ.

Çавăнпа та, йулташсем, тăшман çине сталинла кураймасăр пăхма, сталинла сыхăлăхлă пулма, сталинла критикăпа самокритикă хĕçпăшалĕпе аварланма пирĕн ĕçлес те вĕренес пулать, вĕренес те ĕçлес пулать.

Йулташсем, Чăваш парторганизаци хăйĕн XIX-мĕш конференцине пĕтĕçулĕ, умра тăракан задачсене пурнăçлама çителĕклĕ вăйлă пулнипе çитрĕ. Нимĕн иккĕленмели те çук, партконференци хăйĕн ĕçĕнче ĕç пултарулăхне кăтартĕ. Çавăнпа та епĕ, йулташсем, чăн-чăн тӳрĕ кăмăллă, бољшевикла, сталинла критикăпа самокритикăна сарса йани тăрăх пур çитменлĕхсене те хăйулăн палăртса, малашнехи вађђи практикăлă ĕçсем палăртса хăварма чĕнетĕп. Çакăн пек тума пире пирĕн партин бољшевикла Тĕпкомĕ хушать, çакăн пек тума пире пирĕн аслă Сталин хушать. Конференци хăйĕн ĕçĕсене ăнăçлă ирттерĕ. Пирĕн парторганизаци Ленин — Сталин парти ĕçĕшĕн кĕрешме пултарнине, умра тăракан задачсене пурнăçлама хатĕр тăнине кăтартĕ, мĕншĕн тесен пире парти йертсе пырать, пирĕн ĕçсене пирĕн аслă тăван атте Сталин йертсе пулăшса, çул кăтартса пырать. (ТĂВĂЛЛĂН АЛĂ ÇУПАÇÇĔ. „ИНТЕРНАЦИОНАЛ").

Йулташсем, пĕтĕмпе делегатсем ĕç тăвакан сасăпа 216 çын пулмала, 206 çын çыраннă, канашлакан сасăпа 58 çын пулмала, 56 çын çыраннă. Çавăнпа та епĕ, ПСК(б)П Обком пленумĕ хушнипе, Чăваш республикĕнчи бољшевиксен XIX-мĕш конференцине уçăлнă, тесе шутлатăп. (АЛĂ ÇУПАÇÇĔ. „ИНТЕРНАЦИОНАЛ").

ПСК(б)П Чăваш организацин облăçри XIX-мĕш конференцийĕ Сталин йулташ патне йанă салам

ПСК(б)П Тĕпкомне— СТАЛИН йулташа

Хаклă йулташ Сталин!

ПСК(б)П Чăваш АСС Республикĕнчи организацин вунтăххăрăмĕш партконференцийĕ Сире, Аслă Ленинăн ĕçне гениле малала илсе пыракана, бољшевиксен мухтавлă партин аслă çулпуçне, социалисăмăн аслă çĕнтерĕвĕсене тума хавхалантаракана тата вĕсен организаторĕ, пĕтĕм тĕнчери пусмăр тӳсекенсен çулпуçне, хĕрӳлĕ бољшевикла салам йарать.

Чăваш АСС Республикĕнчи бољшевиксем хăйсен XIX-мĕш партконференцине нихăçанхинчен те ытларах пĕрлĕхлĕ пулса тата ПСК(б)П ленинла-сталинла Тĕпкомĕ тавра нихăçанхинчен çирĕпрех пĕтĕçнине çитрĕç. ПСК(б)П Тĕпкомĕн февраљ-мартри тата йанварти пленумĕсен решенийĕсемпе тата Есĕр панă историлĕ кăтартусемпе хĕçпăшалланса, Чăваш облăç парторганизаци фашисăмăн троцкисла-бухаринла, буржуалă-националисла агĕнчĕсемпе вĕсене пулăшакансене аркатса тăкрĕ, партилĕ советлă тата хуçалăхлă ĕçсенче йертсе пыма ĕçре çитĕннĕ, Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн пĕтĕм чĕререн тăракан çĕнĕ çынсене лартрĕ. Епĕр, Сталин йулташ, Сире çапла шантарса калатпăр: Чăваш АСС Республикĕнчи бољшевиксемпе пĕтĕм чăваш халăхе тăшмансен ирсĕр кайашĕсене, çав ылханлă усалсене, вĕçне çитийех тăпăлтарса кăларма, хамăрăн хăватлă социалисăмлă тăван çĕршывăн оборонă пултарулăхне тата вăйлăрах çирĕплетме хатĕр тăраççĕ.

Парти органĕсен суйлавĕсем тата парторганизацисен нумай пулмасть пулса иртнĕ пухăвĕсемпе конференцисем Чăваш АСС Республикĕнчи бољшевиксем пĕрлĕхлине, ПСК(б)П ленинла-сталинла Тĕпкомĕ тавра тата Сирĕн тавра, хаклă Сталин йулташ, пĕтĕçсе тăнине кăтартса пачĕç.

Чăваш АСС Республикĕнчи ĕççыннисем телейлĕ те хаваслă пурнăçа бољшевиксен партин ленинла-сталинла наци политикине пула турĕç, çакна вĕсем нихăçан та манас çук. Есĕр Ленинпа пĕрле Октăберти Социалисăмла Аслă революцийе йертсе пытăр, царисăм чухне пусмăрлăхра тата тĕттĕмлĕхре пулнă халăхсене социалисăмăн анлă çулĕ çине илсе тухрăр. Есĕр йертсе пынипе, аслă вырăс рабочи класĕ пулăшнипе, Чăваш АСС Республикĕнчи ĕççыннисем социалисăмлă хуçалăх турĕç, формипе нацилĕ, содержанипе социалисăмлă културăна аталантарчĕç. ССР Сойузĕнчи халăхсем сталинла туслăхпа пурăннипе Чăваш АСС Республикĕ советлă социалисăмлă республикăсем хушшинчи малти рете тухрĕ. Чăваш АСС Республикĕнчи халăх çав çĕнтерӳсене ПСК(б)П ленинла-сталинла Тĕпкомĕ куллен йертсе пынипе тата Есĕр, Сталин йулташ, тăрăшнипе ту ине нихăçан та манас çук. Чăваш халăхĕ йачĕпе Сире шантарса калатпăр: ССР Сойузĕнчи халăхсен туслăхне куç шăрçине сыхланă пекех сыхлăпăр тата çирĕплетсе пырăпăр. „Мĕншĕн тесен, çак туслăх пур чухне пирĕн çĕршыври халăхсем ирĕклĕ те никам çĕнтерейми пулаççĕ. Çак туслăх сывă пурăннă чухне пирĕншĕн никам та, шалти тата тулти тăшмансем те, хăрушă мар" (Сталин).

Чăваш АСС Республикĕнчи бољшевиксемпе пĕтĕм чăваш халăхĕ, аслă Совет Сойузĕнчи пĕтĕм халăхсемпе пĕрле, коммунисла парти ĕçĕшĕн, Сталин ĕçĕшĕн пĕтĕм чĕререн тăраççĕ, вĕсем Есĕр чĕн сенех кирек мĕнле тăшмана та, хамăрăн социалисăмлă ырă тăван çĕршывăн таса чиккисене пăсма хăйакана, çĕмĕрмелех отпор пама хатĕр.

Хаклă йулташ Сталин!

Есĕр Чăваш Автономлă Советлă Социалисăмлă Республĕкĕн Верховнăй Совечĕн пĕрремĕш депутачĕ — пĕтĕм халăхăн депутачĕ пулса тăнишĕн чăваш халăхĕ вĕçĕмсĕр хаваслăнса савăнать ПСК(б)П Чăваш организацийĕн XIX-мĕш конференцийĕ Сире шантарса калать: Чăваш АСС Республикĕнчи бољшевиксемпе ĕçхалăх массисем çак пысăк хисепе тата Есĕр хунă шанчăка тивĕçлĕ пулнине кăтартма пĕтĕм вăйа хурĕç. ССР Сойузĕн Верховнăй Совечĕн суйлавĕсем, РСФСР Верховнăй Совечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн суйлавĕсем те Чăваш АСС Республикĕнчи ĕççыннисем коммуниссен партине, хăйĕн йуратнă çулпуçне тата учителне Сталин йулташа вĕçĕмсĕр парăннине тата йуратнине кăтартса пачĕç.

Облăçри бољшевиксен XIX-мĕш партконференцийĕ Сире, Сталин йулташ, шантарса калать: Чăваш АСС Республикĕнчи бољшевиксем, Есĕр бољшевисăма вĕренсе алла илесси çинчен тата капиталисăмла йĕри-тавралăх çинчен кăтартса пани тăрăх ĕçлесе, хăйсен революцилĕ сыхăлăхне ӳстерсе, çивечлентерсе пырĕç. Парти историн сталинла учебникĕнчи çак чаплă сăмахсене вĕсем манмĕç: „Парти вăл рабочи класăн йертсе пыракан отрйачĕ, унăн малта тăракан крепăçĕ, унăн кĕрешӳлĕ штабĕ. Рабочи класăн йертсе пыракан штабĕнче çирĕп мар çынсем, оппортуниссем, капитуљантсем, предателсем ларнине пулма памала мар. Хамăрăн штабра, хамăрăн крепăçре капитуљантсемпе предателсем пур çинчех буржуазийе хирĕç вилĕмлех кĕрешни—вĕсем çине фронтран та, тылран та персе тăнă лару-тăрури çынсен выранне лекнине пĕлтерет" (ПСК(б)П историн ПСК(б)П Тĕпкомĕ ырланă Кĕске курсĕ).

Фашисăмăн троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла ылханлă агĕнчĕсен кайашĕсене пурне те епĕр нимĕн хĕрхенӳсĕр тăрă шыв çине кăларăпăр, сăтăрлăх йулашкисене пĕтерме тата хăватлăрах ĕçлесе пырăпăр, Епĕр ывăнма пĕлмесĕр çĕнĕ кадрсене ĕçе лартса тата воспитани парса пырăпăр. Епĕр, тăшмана унăн территорийĕ çинчех çĕмĕрсе тăкма пĕтĕм совет халăхĕ мобилизацилĕ хатĕрлĕхре пултăр тесе, хамăр çĕршывăн оборонă пултарулăхне çирĕплетме, республикăри пĕтĕм ĕççыннисене социалисăмлă тăван çĕршыва вĕçĕмсĕр паранса йуратакан туса воспитани пама мĕн кирлине пурне те тăвăпăр.

Епĕр, Чăваш АСС Республикĕнчи бољшевиксем, пирĕн умра хуçалăхлă тата политикăлă пит пысăк задачсем тăнине лайăх ăнланатпăр. Республикăра пысăк строителствă сарăлса пыни, колхозсене организацилпе хуçалăх тĕлĕшпе çирĕплетесси малалла сарăлса пыни—çаксем пире вăйа ӳстерсе ĕçлеме, организацилĕ пулма хушаççĕ. Епĕр, умри задачсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртме, пĕтĕм вăйа хурса тата çине тăрса ĕçлĕпĕр. Хамăрăн конференцире епĕр пирĕн умра тăракан политикăлă тата хуçалăхлă пур задачсене те сӳтсе йаватпăр. Республикăри советлă тата партилĕ организацисен ĕçĕнчи йанăшсемпе çитменлĕхсене вĕçне çитийех палăртăпăр, социалисăм строителствинче малала çитĕвӳсем тума май паракан решенисем йышăнăпăр.

Хаклă йулташ Сталин! Облăçри XIX-мĕш партконференци Сире Чăваш облăç парторганизаци ПСК(б)П Тĕпкомĕн шанчăклă та çирĕп тĕрекĕ пулнă, халĕ те çавах, малашне те çавах пулĕ, тесе шантарса калать.

Сывă пултăр Ленинăн-Сталинăн аслă партийĕ, бољшевиксен партийĕ!

Сывă пултăр ПСК(б)П сталинла Тĕпкомĕ!

Сывă пултăр пирĕн аслă, çулпуç тата учител Иосиф Виссарионович Сталин!

Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (бољшевиксен) Партин Чăваш облăç XIX-мĕш конференцийĕ.

ПСК(б)П Чăваш организацин облăçри XIX-мĕш конференци дневникĕ

Çенťаберĕн 24-мĕшĕнче, каçхине 6 сехетре, ПСК(б)П Чăваш организацин облăçри XIX конференцийĕ уçăлчĕ.

Конференцине ПСК(б)П Обкомĕн пĕрремĕш çекретарĕн ĕçĕсене туса пыраканĕ А. А. ВОЛКĂВ йулташ малтанхи сăмах каласа уçрĕ.

Конференци ĕçлĕ президиума 19 çынран суйларĕ. Президиума: З. А. АНДРЕЙЕВĂ (ЧАССР Верховнăй Совет Президиумĕн председателĕ), А. А. ВОЛКĂВ (ПСК(б)П Обкомĕн пĕрремĕш çекретарĕн ĕçĕсене тăваканĕ), И. В. ДУБĂВ (ПСК(б)П Обкомĕн иккĕмĕш çекретарĕ), М. С. КЊАÇЕВ (Тутаркас районĕнчи „Çĕнĕ çул" колхозран), П. А. КОЗУЉАЙЕВ (ПСК(б)П Тĕпком инструкторĕ), П. И. КОЊАКИН (Шалти ĕçсен Халăх Комиссарĕ), С. К. КОРОТКОВ (Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ), А. М. КРАСНОВ (Верховнăй Совет президиумĕн председател заместителĕ), С. М. КРЫЛОВ (ПСК(б)П Улатăр райком çекретарĕ), М. И. ЛАПИН (ПСК(б)П Шупашкар хула комитет çекретарĕ), М. В. ЛИСИН (Улатăр чукунçул çинчи политпай начаљникĕ), И. Н. НИКИФĂРАВ (ПСÇЛКС Обком çекретарĕ), И. В. НОВИКĂВ (ПСК(б)П Обком бӳро членĕ), А. В. СОМĂВ (Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председател заместителĕ), Г. И. ТЕПЕЙЕВ (ПСК(б)П Ишлей райком çекретарĕ), А. В. ФИЛИППАВĂ (Куславкка районĕнчи „Канаш" колхоз председателĕ), А. В. ЧАПРАЙЕВА (Шупашкар), П. П. ЧУРИЛĂВ (ПСК(б)П Обком инструкторĕ) тата В. М. ШИШКИН (Партколлеги çекретарĕ) йулташсем суйланчĕç.

Хисеплĕ президиума конференци тăвăллăн алă çупипе СТАЛИН йулташа, МОЛАТАВ, КАГАНОВИЧ, ВОРОШИЛАВ, КАЛИНИН, ЖДАНАВ, ЙЕЖОВ, МИКОЙАН, АНДРЕЙЕВ, ХРУШЧОВ, ДИМИТРОВ, ТЕЉМАН тата ХОЗЕ ДИАС йулташсене суйларĕ.

—Аслă Сталина—урра!—тесе кăшкăрни илтĕнсен, конференци делегачĕсем пурте ура çине тăрса, нумайччен тăвăллăн алă çупаççĕ.

Конференци мандат комиççине суйлама тытăнать. Мандат комиççине: А. И. КРЫЛОВ (ПСК(б)П Вăрнар райкомĕн çекретарĕ), П. М. КОЗЛОВ (Куславкка комбинатĕнчен), А. Г. ИВАНОВ (Партколлеги членĕ), Е. Й. МИДАКОВ (ПСК(б)П Çĕмĕрле райком çекретарĕ), О. Т. ХАРИТОНАВĂ (Патăрйел райĕçтăвком председателĕ), Б. В. ВАÇИЛЙЕВ (ПСК(б)П Тăвай райкомĕн çекретарĕ), П. К. МАЗУРИН (Партколлеги) йулташсем суйланаççĕ.

Çекретарната конференци çак йулташсене суйлать: С. В. КАРТАШОВ (ПСК(б)П Обкомĕн пичетпе издателствăсен пайĕн пуçлăхĕ), П. Т. ТЕРЕНТЙЕВ (ПСК(б)П Обкомĕн шкулсен пайĕн пуçлăхĕ), В. Т. ХАРИТОНАВ (Сутĕç Халăх Комиссарĕ), Т. А. АХАЗАВ („Красная Чувашия" хаçат редакторĕн ĕçĕсене тăваканĕ) тата Н. М. ÇЕМЕНĂВ („Чăваш Коммунĕ" хаçат редакторĕ).

Конференци хăйĕн йертсе пыракан органĕсене суйланă хыççăн, тăвăллăн та нумайччен алă çупипе Сталин йулташ патне саламлă çыру йама йышăнать.

Конференцин кун йĕркине çакăн пек ыйтусем кĕртсе çирĕплетеççĕ:

1. ПСК(б)П Обкомĕн отчочĕ;
2. Ревизи комиççин отчочĕ;
3. ПСК(б)П Обкомне суйласси;
4. Ревизи комиççине суйласси.

Çенťаберĕн 24-мĕшĕнчи лару вĕçĕнче конференци ПСК(б)П Обкомĕн ĕçĕсем çинчен ПСК(б)П Обкомĕн иккĕмĕш çекретарĕн И. В. Дубăв йулташăн докладне итлеме тытăнать.

Çенťаберĕн 25-мĕшĕнчи ирхи лару

ПСК(б)П Чăваш организацин облăçри XIX-мĕш конференцийĕн çенťаберĕн 25-мĕшĕнчи ирхи ларăвĕнче ПСК(б)П Обком ĕçĕсем çинчен ДУБĂВ йулташăн доклачĕ малала пычĕ. Унтан ревизи комиççи ĕçĕсем çинчен КРАÇИЛНИКĂВ йулташ доклад туса пачĕ. Кун хыççăн Обком тата ревизи комиççи ĕçĕсем çинчен тунă докладсем тăрăх пренисем пуçланчĕç.

Пренире чи малтан КИРЕЙЕВ (Улатăр р.) йулташ тухса каларĕ.

— ПСК(б)П Обком руководствинче тăшмансем тата двурушник Г. Иванов пулман пулсан,—тет Кирейĕв йулташ, — пирĕн Чăваш парторганизацийĕ хуçалăх, културă строителствине ӳстерес ĕçре, троцкисла-бухаринла, буржуалă-националисла бандăсене пĕтерес тĕлĕшпе татах та пысăк çитĕнӳсем тунă пулĕччĕ. Обком çекретарĕ пулнă Иванов икĕ питленсе ĕçленĕ, партине улталанă, самокритикăна хĕснĕ.

Кирейĕв йулташ Ивановăн партине хирĕçле ĕçне тăрă шыв çине кăларас тĕлĕшпе парти Обкомĕн иккĕмĕш çекретарĕ Дубăв йулташ нимĕн те туманни, вăл политикăлă тимсĕр пулни çинчен калать. Улатăр парторганизацийĕ И. Захаравăн тăшманла ĕçĕсем çинчен Обкома, Дубăв йулташа хăйне те пĕлтернĕ. Анчах Дубăв çак сигнал çине бољшевикла пăхман, „Захарăв ĕçĕ пĕтнĕ, уи çинчен текех каласмали çук" тесе ирттерсе йанă. Кирейĕв йулташ ПСК(б)П Обкомĕн промышлĕннăçпа транспăрт пайĕ промышлĕннăçра, транспăртра ĕçсем мĕнле тăнине пĕлмест, хуçалăхăн çак отрăçлисене Обком начар йертсе пынă тесе калать.

Партин Тутаркас райком çекретарĕ АНИÇИМАВ йулташ Обком тата унăн çекретарĕсем Дубăвпа Павлăв йулташсем райкомсене çителĕксĕр йертсе пыни, вĕсене пулăшманни çине кăтартса парать. Обком çекретарĕ пулнă Иванов хăйĕн сывăх тусĕсене Обком аппаратне илнĕ, вĕсем пулăшнипе самокритикăна хĕснĕ. Ивановăн сылтăм алли Полтĕв пулнă. Малала Аниçимăв тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене пĕтерессн вăраххăн пыни çинчен чарăнса тăрать.

— Иванов партине хирĕçле, икĕпитленсе ĕçленине тăрă шыв çине кăлармаишĕн Дубăвпа Павлăв йулташсем те айăплă, тет КРАСНОВ (Шупашкар) йулташ. Обком бӳро членĕсем революцилĕ сыхăлăхлă пулнă пулсан, халăх тăшманĕсен сăтăрлă, сутăнчăкла ĕçĕсене çийĕнчех тăрă шыв çине кăларнă пулăттăмăр. Анчах Обком бӳро членĕсем хăйсем те идиотла чирпе—политикăлă тимсĕрлĕхпе чирленĕ пулнă.

ИВАНОВ йулташ (ПСК(б)П Пăрачкав райком çекретарĕ) парти Обкомĕн руководстви тăшмансене хирĕç татăклăн кĕрешме пултарайманнине кăтартать. Иванов халăх тăшманне, Соколњикăв предателе мухтанă, ăна çыхăну управлени çумĕнчи пуçламĕш парторганизаци парти ретĕнчен кăларса çапсан, Иванов ăна партирех хăвармала тунă.

Г. Çеменăв йулташ (Парти Обкомĕн култпросвет пайĕн пуçлăхĕ) Обкомра нумайранпа ĕçлет. Вăл Петровсемпе Кузнецовсем чухнех Обком аппаратĕнче ĕçленĕ. Анчах вăл халăх тăшманĕсене тăрă шыв çине кăларса пĕтерес ыйтăва çивĕччĕн лартман, тăшмансене хирĕç пыракан кĕрешӳрен айакка пăрăнса йулать, тет Иванов йулташ. Иванов йулташ: самокритикăна хĕсекен, тăшмансемпе пĕрле нумай вăхăт хушши ĕçленĕ, йăпăлти Г. О. Оçипăв çинчен мĕншĕн ку таранччен те ыйту лартман? тесе ыйтать. Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕн заместителĕ Артемйĕв йулташ буржуалă-националиспа Ваструкпа пĕрле ĕçленĕ, анчах вăл ăна тăрă шыв çине кăларас тĕлĕшпе нимĕн те туман.

ГРИГОРЙЕВ (Улатăр) йулташ: „Дубăв йулташ доклачĕ самокритикăлă мар, вăл редакцисене критиклерĕ, анчах хăйĕн Обком бӳро членĕсен политикăлă йанăшĕсем çинчен уççăн калама бољшевикла хăйулăх тупаймарĕ", тет.

— Епĕр, тет Григорйĕв йулташ, Спасăв тăшман пулни çинчен 1936 çулта та, 1937 çулта та Обкома пĕлтернĕ, анчах Обком бӳровĕ пирĕн сигнала пĕтерсе пычĕ, тăшмана хутĕлерĕ.

А. РОМАНĂВ (Улатăр) Обком кадрсем, уйрăмăн илсен пичет ĕçĕнче ĕçлекенсене хатĕрлессипе тăрăшманни çинчен каларĕ. Пичет работникĕсене вĕрентсе хатĕрлеме парти Тĕпкомĕ панă 26.000 тенкĕ укçапа уса курманни çакна лайăх кăтартса парать.

Çенťаберĕн 25-мĕшĕнчи каçхи ларура ПСК(б)П Обкомĕпе ревизи комиççи отчочĕсем тăрăх пренисем малала пычĕç. Пренире 10 делегат тухса каларĕ.

Комсомолӑн йертсе пыракан органӗсене суйласси ҫинчен

ПСҪЛКС Тӗп Комитечӗн постановленийӗ

Комсомол организацийӗсенчен нумайӗшӗ комитетсене, комитетсем ҫук ҫӗрте комсомол пуҫламӗш организацисен ҫекретарӗсене, цехри, ҫменӑри тата вӗсемпе тан организацисен бӳровӗсене, комсоргсемпе группоргсене суйлама ҫителӗклӗ хатӗрленмен пирки, пуҫламӗш организацисенчи суйлавсен пуҫламӗшне 1938 ҫулхи октябӗрӗн 15-мӗшне куҫарас.

ПСҪЛКС пуҫламӗш организацийӗсенчи суйлавсем пӗтнӗ хыҫҫӑн, комсомолӑн мӗн пур районсенчи, хуласенчи, округсенчи, облаҫсенчи, крайсенчи тата республикӑсенчи организацисенче йертсе пыракан органсен суйлавне ирттерес.

Пуҫламӗш организацисен тата районри, хулари, округри, облаҫри, крайри, республикӑри организацисен йертсе пыракан органӗсен отчочӗсемпе суйлавӗсене 1938 ҫулхи октябӗрӗн 15-мӗшӗнче пуҫламала та 1939 ҫулхи йанварӗн 25-мӗшӗнчен кайа йулмасӑр пӗтермеле.

Комсомолӑн йертсе пыракан органӗсен отчочӗсене ирттерме ҫакӑн пек йӗрке тӑвас:

комитетсем, комитетсем ҫук ҫӗрте комсомол пуҫламӗш организацисен ҫекретарӗсем хӑйсен ӗҫӗсем ҫинчен комсомол пухӑвӗсенче отчот тӑваҫҫӗ;

райкомсем, хула комитечӗсем, окружкомсем хӑйсен ӗҫӗсем ҫинчен обйазатӗлнӑ комсомолӑн районри, хулари тата округри конференцийӗсенче отчот тӑваҫҫӗ;

обкомсем, крайкомсем тата нацилӗ республикӑри ҪЛКС Тӗпкомӗсем хӑйсен ӗҫӗсем ҫинчен обйазатӗлнӑ комсомолӑн облаҫри, крайри конференцийӗсенче тата республикӑри сйесӗсенче отчот тӑваҫҫӗ.

Пӗтӗм комсомол организацийӗсен ҫитес суйлавӗри чи пысӑк задачи — комсомолӑн йертсе пыракан органӗсене халӑх тӑшманӗсене хирӗҫ кӗрешнӗ ҫӗрте чӑннипех тӗрӗсленӗ тата Ленин—Сталин партийӗн ӗҫне вӗҫне ҫитийех хӳтӗлеме пултаракан комсомолецсене суйламала тӑвасси пулат̆, тесе шутлас.

Суйлавсем комсомолецсен сыхӑлӑхне татах та хӑпартас, ҫамрӑксем хушшинчи воспитани ӗҫне вӑйлатас, комсомол хуҫалӑхӗнче кӑтартулӑ йӗрке тӑвас тата комсомол организацийӗсен ӗҫне мӗн май пур таранах лайӑхлатас паллӑпа пулса иртмеле.

Комсомолӑн йертсе пыракан органӗсен суйлавне бољшевикла критикӑпа самокритикӑна анлӑн сарса тата сойузӑн шалти демократине хыта астуса ирттермеле.

Комсомолӑн йертсе пыракан органӗсен суйлавне ирттермели йӗрке ҫинчен инструкци ҫирӗплетес, „Комсомольская правда" хаҫатра 1938 ҫулхи августӑн 23-мӗшӗнче кӑларнӑ малтанхи инструкцине пӑрахӑҫ тӑвас.

ПСҪЛКС ТӖП КОМИТЕЧӖ.

Комсомолӑн йертсе пыракан органӗсен суйлавне ирттермели инструкци

1. Комсомолӑн йертсе пыракан органӗсен суйлавне ирттернӗ чух ПСҪЛКС Тӗп комитечӗн III-мӗш пленумӗ ҫапла йышӑннине пӗр пӑрӑнмасӑр ӗҫе кӗртсе пымала:

„Комсомол органӗсене суйланӑ чух списокпа сасӑлама чарас. Комсомолецсене кандидатсем пирки хирӗҫ тухса каламалла тата вӗсене тишкерме пӗртте чарса тӑрас мар, сасӑлассине кашни кандидата уйрӑмӑн сасӑлас.

Комсомол органӗсене суйланӑ чух пуҫламӗш организацин комитетӗнчен пуҫласа ПСҪЛКС Тӗп комитетне ҫитиччenех хуппӑн (вӑрттӑн) сасӑламала тӑвас".

2. Хуппӑн (вӑрттӑн) сасӑласа суйлаҫҫӗ:

а) комсомол пуҫламӗш организацисенчен комсомолӑн районри, хулари конференцийӗсене кайакан делегатсене тата районри, хулари, округри комсомол конференцийӗсенчен облаҫри, крайри комсомол конференцийӗсене тата нацилӗ республикӑри комсомолӑн сйесне кайакан делегатсене;

б) комсомол комитечӗн членӗсене, комитетсем ҫук ҫӗрте—комсомол пуҫламӗш организацийӗсен ҫекретарӗсемпе вӗсен заместителӗсене;

в) бӳро членӗсене тата, бӳро ҫук ҫӗрте, цехри, факуљтетри, отделенири, ҫменӑри, участкӑри организацисен комсоргӗсене, комсомол ушкӑнӗсен группоргӗсене;

г) районри, хулари, округри, облаҫри, крайри комитетсен, нацилӗ республикӑри комсомол Тӗпкомӗсен пленум членӗсене тата ревизи комиҫҫи членӗсене.

3. Уҫҫӑн сасӑласа суйлаҫҫӗ:

а) комсомол пуҫламӗш организаци комитечӗсен ҫекретарӗсене тата вӗсен заместителӗсене комитет ларӑвӗсенче;

б) цехри, ҫменӑри, участкӑри, факуљтетри, отделенири комсомол организацисен бӳровӗн ҫекретарӗсене бӳро ларӑвӗсенче;

в) районри, хулари, округри, облаҫри, крайри комитетсен тата нацилӗ республикӑри комсомол Тӗпкомӗсен ҫекретарӗсемпе бӳро членӗсене ҫав комитетсен пленумӗсенче суйлаҫҫӗ.

4. Комсомол конференцийӗн (пухӑвӗн) президиумне тата йертсе пыракан ытти органӗсене, конференци (пуху) йышӑннӑ хисепне, уҫҫӑн сасӑласа суйлаҫҫӗ.

Конференцин йертсе пыракан органӗсене тата ҫӗнӗрен суйланакан комсомол комитечӗн составне комсомол конференцине канашлакан сасӑпа пынӑ делегатсем те суйланма пултараҫҫӗ.

5. Комсомолӑн йертсе пыракан органӗсене тивӗҫлӗ комсомол комитечӗн тата ревизи комиҫҫийӗн отчотлӑ докладне итлесе, сӳтсе-йавса, конференци (пуху) ун тӑрӑх решени йышӑннӑ хыҫҫӑн тин суйлаҫҫӗ.

Комсомол органӗсен отчочӗсене малтанах комсомолӑн тивӗҫлӗ комитечӗсен пленумӗсенче сӳтсе-йаваҫҫӗ.

Отчотлӑ докладсене малтан комсомол комитечӗсен пленумӗсенче сӳтсе-йавни ҫав комитет пленумӗсен членӗсене комсомол пухӑвӗсенче тата конференцисенче комсомол организацийӗсене йертсе пырас ҫӗрти ҫитменлӗхсене тишкерсе тухса калама чармасӑт̆.

6. Суйлав ирттерес умӗн комсомол конференцийӗ (пухӑвӗ) комсомолӑн суйламали органӗсене миҫе член тата кандидат суйлаҫа хӑвармалине палӑртат̆.

7. Йертсе пыракан комсомол органӗн ҫӗнӗ составне суйламали кандидатурӑсене (члена суйламалисене—уйрӑмӑн, кандидата суйламалисене—уйрӑмӑн) делегатсем тӳрех комсомол конференцийӗнче тӑратаҫҫӗ те ҫавӑнтах сӳтсе-йаваҫҫӗ.

Спискӑсене малтан хатӗрлесе хума тата комсомол конференцийӗсӗр (пухӑвӗсӗр) пуҫне урӑх ҫӗрте сӳтсе-йавма йурамасӑт̆.

Комсомолӑн йертсе пыракан органне суйлама кандидатурӑ парас текен пухури кашни ҫынна, конференци делегатне конференци (пуху) президиумӗ кандидатурӑ пирки сӗнӳ пама тата вӑл сӗнӗве мӗн пирки пани ҫинчен каласа кӑтартма сӑмах парат̆.

Кандидатурӑсем урӑх тӑратас мар тесе сӗнӳ парсан, конференци (пуху) президиумӗ вӑл сӗнӗве конференци (пуху) умне лартат̆ те, ҫӗнӗ кандидатурӑсем ҫырассипе ҫырас марри ҫинчен ыйтӑва уҫҫӑн сасӑласа татаҫҫӗ.

8. Комсомолӑн йертсе пыракан органне суйлама тӑратнӑ пур кандидатурӑсене те, вӗсене комсомол конференцийӗн (пухӑвӗн) президиумне пырса тӑнӑ ҫемӗн мӗнле ҫырса пынӑ, ҫав йӗркепе сӳтсе-йавмала.

Кандидатурӑсене кашнине уйрӑмӑн сӳтсе-йавнӑ чух, комсомолӑн йертсе пыракан органне суйлама тӑратнӑ кандидатурӑсене хирӗҫ тухса калама пӗртте чармала мар, урӑхла каласан, делегатсем кашнийех суйлама палӑртнӑ темиҫе кандидатурӑна хирӗҫ те калама тата кашни кандидатурӑ тӑрӑх „майлӑ" та, „хирӗҫ" те темиҫе хут та тухса калама пултараҫҫӗ.

Пӗр-пӗр кандидатурӑ пирки сӳтсе-йавма чарӑнасси ҫинчен сӗнӳ парсан, вӑл кандидатурӑ пирки сӳтсе-йавма чарӑнас ыйтӑва конференци (пуху) уҫҫӑн сасӑласа татат̆.

Комсомолӑн йертсе пыракан органӗсене суйланӑ чух ПСҪЛКС-ӗн кашни членӗ, вӑл миҫе ҫултине пӑхмасӑр, суйлама та, суйланма та пултарат̆.

Комсомол конференцийӗнчи канашлакан сасӑлӑ делегатсем тата, комсомол пуҫламӗш организацийӗн пухӑвӗнче, комсомолецсен районри пухӑвӗнче пулсан, ПСҪЛКС членӗн кандидачӗсем комсомолӑн йертсе пыракан органӗсене суйлама тӑратнӑ кандидатурӑсене сӳтсе-йавнӑ чух канашлакан сасӑпа усӑ кураҫҫӗ.

9. Хирӗҫ тухса калакансем пулнӑ кандидатурӑсене сӳтсе-йавнӑ хыҫҫӑн, ҫав кандидатурӑна комсомолӑн йертсе пыракан органне хуппӑн (вӑрттӑн) сасӑласа суйлама комсомол конференцийӗ (пухӑвӗ) тӑвакан спискӑ ҫине кӗртессипе кӗртес маррине кашнинчех уҫҫӑн сасӑласа татмала.

Ҫавӑн чухне спискӑран кӑларассишӗн миҫе ҫын сасӑланине те, спискӑра хӑварассишӗн миҫе ҫын сасӑланине те шута илмеле.

Кандидатурӑна хирӗҫ никам та тухса каламан пулсан, ун пирки уҫҫӑн сасӑламаҫҫӗ те, тӳрех хуппӑн (вӑрттӑн) сасӑламалли списокне кӗртеҫҫӗ.

10. Комсомолӑн йертсе пыракан органӗсене суйлас умӗн хуппӑн (вӑрттӑн) сасӑлани мӗн кӑтартнине шутласа тухма комсомол конференцийӗ (пухӑвӗ) хӑй миҫе ҫынран суйлас тенӗ ҫавӑн чул ҫынран уҫҫӑн сасӑласа шут комиҫҫийӗ суйлат̆. Шут комиҫҫийӗн членӗсем хӑйсем хушшинчен шут комиҫҫийӗн председателне суйлаҫҫӗ.

Сасӑлас умӗн шут комиҫҫийӗн председателӗ комсомол конференцийӗн (пухӑвӗн) делегачӗсене хуппӑн (вӑрттӑн) сасӑлас йӗркесене ӑнлантарса пама тивӗҫ.

Хуппӑн сасӑлас умӗн шут комиҫҫийӗ суйлав йешчӗкӗсем хатӗрлеме тата вӗсене хӑйех пичетлесе йе ҫӑрапа питӗрсе лартма тивӗҫлӗ.

11. Комсомолӑн йертсе пыракан органӗсене суйланӑ чух хуппӑн (вӑрттӑн) сасӑласси комсомол конференцийӗн хупӑ ларӑвӗнче пулса иртмеле, унта ӗҫ тӑвакан сасӑлӑ делегатсем ҫеҫ пулма пултараҫҫӗ.

12. Ӗҫ тӑвакан сасӑлӑ кашни делегат комсомолӑн йертсе пыракан органне суйлама конференци (пуху) палӑртнӑ кандидатурӑсен пӗр спискине илет. ПСҪЛКС членӗн делегат мандачӗ ҫинче йе конференцине (пухӑва) пынӑ комсомол членӗсен спискинче ҫав ПСҪЛКС членӗ суйлава хутшӑнни ҫинчен паллӑ тумала.

13. Хуппӑн (вӑрттӑн) сасӑланӑ чухне кашни делегат уйрӑм кандидатурӑсене хуратса хума тата, комсомол органне конференци (пуху) миҫе ҫынран суйлама йышӑннине пӑхмасӑр, комсомолӑн йертсе пыракан органне ҫӗнӗ кандидатурӑсем хушса кӗртме те пултарат̆.

14. Сасӑланӑ хыҫҫӑн шут комиҫҫийӗ суйлав йешчӗкӗсене уҫат̆ те, конференци (пуху) пыракан суртран тухмасӑр, сасӑлани мӗн кӑтартнине шутласа тухат̆: комсомол органӗн членӗсенне—уйрӑмӑн, вӗсен кандидачӗсенне—уйрӑмӑн.

Шут комиҫҫийӗн кашни кандидатурӑ пирки уйрӑмӑн „майлӑ" тата „хирӗҫ" миҫе сасӑ панине шутласа тухмала.

Сасӑсене шутласа тухнӑ хыҫҫӑн, шут комиҫҫийӗ протокол ҫырат̆, вӑл протокол ҫине кашни кандидатурӑшӑн сасӑланине уйрӑмшарӑн кӗртет те, ҫав протокол ҫине комиҫҫи членӗсем пурте алӑ пусаҫҫӗ.

Сасӑсене шутлакан пӳлӗмре шут комиҫҫийӗн членӗсемсӗр пуҫне никам та пулма пултараймасӑт̆.

15. Комсомол конференцийӗн (пухӑвӗн) ларӑвӗнче шут комиҫҫийӗ кашни кандидатурӑ тӑрӑх йепле сасӑлани ҫинчен каласа кӑтартат̆.

Комсомолӑн йертсе пыракан органне нумайрах сасӑ илнӗ кандидатурӑсем суйланнӑ шутланаҫҫӗ, анчах вӑл сасӑсен шучӗ конференцине ӗҫ тӑвакан сасӑпа пынӑ делегатсен хисепӗнчен ҫурӑран кайа пулмала мар.

16. Хуппӑн (вӑрттӑн) сасӑланин материалӗсене (кандидатурӑсен спискисене, ҫырса панӑ зайавленисене, сасӑсене шутланине т. ыт. те) пӗтӗмпех комсомол органӗсенче ҫекретлӑ документсем шутӗнче усрамала.

ПСҪЛКС ТӖП КОМИТЕЧӖ.

ПАРТИ ПУРНӐҪӖ

Пропагандиссен ҫеминарӗ

КУСЛАВККА, 25. IX. (Хамӑр корр. телефонпа). ПСК(б) Парти историйӗн Кӗске курсне вӗренес ӗҫе хатӗрленес тӗлӗшпе Куславкка райкомӗн парти кабинечӗ пысӑк ӗҫсем туса ирттерет. Парти историйӗн Кӗске курсӗн пӗрремӗш сыпӑкне вӗренме кирлӗ литературӑна уйӑрса хунӑ, диаграммӑсен, таблицӑсен тата ытти иљљустраци материалӗсен выставкине организацилӗ. Кунашкал выставкӑ кашни темӑ тӑрӑх пулат̆.

Парти кабинечӗ ҫумӗнче пропагандиссен ҫеминарӗ ӗҫлеме пуҫланӑ. Ҫеминарӑн 1-мӗш заӊатийӗ пит те йӗркелӗ иртрӗ. Заӊатине пур пропагандиссем те лайӑх хатӗрленсе, палӑртнӑ вӑхӑтра хӑрас пухӑнчӗҫ. Пӗрремӗш темӑ тӑрӑх тунӑ лекцийе пропагандиссем пысӑк тимлӗхпе итлерӗҫ. Хӑйсем мӗнле ӑнланни ҫинчен тухса каларӗҫ, ӑнланман вырӑнсене лектӑрган ыйтса пӗлчӗҫ. Лектӑра пӗтӗмпе 15 ыйту пачӗҫ. Пропагандиссем хушшинче активлӑх нихӑҫанхинчен те пысӑк.

Пропагандиссене кулленех консуљтаци пама квалификацилӗ виҫӗ консуљтант ҫирӗплетнӗ. Ҫавӑн пекех вӗренекенсен заӊатине тӗплӗн хатӗрленме пулӑшма 11 консуљтант уйӑрнӑ. Пропагандиссем ваљљи опытлӑ лектӑрсем Ленинӑн тата Сталинӑн уйрӑм произведенийӗсем тӑрӑх лекцисем вуласа параҫҫӗ.

М. Йакимӑв.

ПСК(б)П Обком Пленумӗн решенийӗсене ырларӗҫ

Ҫентябӗрӗн 21-мӗшӗнче Вӑрнар парторганизацинче парти активӗн канашлӑвӗ пулса иртрӗ. Канашлу ПСК(б)П Обкомӗн VII-мӗш пленумӗн ӗҫӗсем ҫинчен Крылов йулташ докладне итлесе сӳтсе-йаврӗ. Актив пленум йышӑннӑ решенисене пӗтӗмӗшпех ырларӗ.

Канашлура тухса калакансем чылайӗшӗ парти Обкомӗн уйрӑм пайӗсенче чылай ҫитменлӗхсем пуррине палӑртрӗҫ. Вӗсене партин облаҫри 19-мӗш конференцине кайакан делегатсене шута илме сӗнчӗҫ.

Игорӗв (Уполнаркомзаг), Смирнов (МТС) йулташсем Обкомӑн йалхуҫалӑх пайӗ йалхуҫалӑх йенӗпе питӗ йапӑх ӗҫленине, унӑн заведуйушчийӗ Колцов йенчен нимӗнле руководствӑ та ҫуккине палӑртрӗ.

Тухса калакансем парти Обкомӗн виҫҫӗмӗш ҫекретарӗ Н. Павлӑв Вӑрнар районӗнче ӗҫленӗ чух клас тӑшманӗсене (Афиногенӑв, Курбатӑв) тӑрӑ шыв ҫине кӑларас вырӑнне, вӗсемпе ҫыхӑну тытса пурӑннине палӑртрӗҫ.

Канашлу Обком пленумӗн решенийӗсем политикӑлӑ сыхӑлӑха пур чухне те, пур ҫӗрте те тата ытларах вӑйлатма кирлине, троцкисла-бухаринла, буржуалӑ-националисла ирсӗрсен йулашкийӗсене тата халӑхӑн ытти тӑшманӗсене те тӗпӗ-йӗрӗпе тӑрӑ шыв ҫине кӑларса таткӑланах ҫӗмӗрсе тӑкассишӗн кӗрешӗве ӳстерме кирлине ҫирӗппӗн палӑртрӗ.

ПСК(б)П историйӗн Кӗске курсне вӗренни—коммуниссен, комсомолецсен тата пӗтӗм ӗҫҫыннисен ревољуцилӗ сыхӑлӑхне хӑпартма, идейӑлӑ ҫӳлӗшне ӳстерме тата кӗрешӳ пултарулӑхне вӑйлатма пулӑшассине шута илсе, канашлу парти райкомне ПСК(б)П историйӗн Кӗске курсне тарӑнӑн вӗренессине организацилеме сӗнӳ пачӗ.

Канашлу район хуҫалӑхпа политикӑлӑ задачӑсене пурнӑҫа кӗртнӗ ҫӗрте кайа йулнине палӑртса, ҫак квартӑл вӗҫне кайа йулса пырассине пӗтерме ҫирӗп обйазателствӑ илчӗ.

С. Сергейӗв.

Комитет ҫекретарӗн заместителӗн ӗҫӗсем

ТУРХАН. Липӑвкӑри Ленин йачӗпе тӑракан вӑрман промысла ертелӗ ҫумӗнчи комсомол пуҫламӗш организаци пухӑвӗ Ҫ. Кузнецов йулташа комитет ҫекретарӗн 2-мӗш заместителне суйласа хӑварчӗ. Вӑл ҫавӑн пек шанчӑка тивӗҫлӗ ӗҫпе ответлет. Комсомолецсемпе, рабочисемпе служащисем хушшинче политикӑлӑ-массӑлӑ ӗҫе вӑйлатса пырат̆. Кун сиктерсе, цехри рабочисемпе кашни ҫменӑ хыҫҫӑнах политикӑлӑ ӑнлантарулӑ каласусем туса ирттерет. ССР Сойузӗн Верховнӑй Совечӗн 2-мӗш Ҫессийӗ йышӑннӑ саккунсем ҫинчен вӑрманта, стружкӑ цехӗнче ӗҫлекен тата стружкӑ турттаракан рабочисем хушшинче ӑнлантарса пачӗ. Рабочисем Ҫессӗ йышӑнӑвӗсене ырлаҫҫӗ.

Ив. Архипӑв.

Тӑван ҫӗршыв-аннемӗр ваљљи парнесем хатӗрлеҫҫӗ

Комсомолӑн 20 ҫулхи йубилейӗ йачӗпе М. Горький йачӗпе тӑракан Шупашкарти ватам шкулта отличнӑ вӗренессишӗн социалисӑмлӑ ӑмӑрту ӑнлӑн сарӑлса пырат̆. Ӑмӑртӑва пуҫарса йараканӗсем—комсомолецсемпе пионерсем. Класпа клас, отрйадпа отрйад, звенопа звено пӗр-пӗринпе ӑмӑртаҫҫӗ. Кунсӑр пуҫне уйрӑм вӗренекенсем те пӗр-пӗрин хушшинче ӑмӑртаҫҫӗ.

Йубилей тӗлне 11 отрйадран кашнийех икшер номӗр ҫтена хаҫачӗ кӑлараҫҫӗ, ҫавӑн пекех пӗтӗм шкул ачисен „За отличную учебу" ҫтена хаҫачӗ те икӗ номӗр тухат̆. Ҫиччӗмӗшпе саккӑрмӗш классенчи виҫӗ отрйадри пионерсем ачасен телейлӗ пурнӑҫӗ ҫинчен художествӑлӑ аљбом хатӗрлеҫҫӗ. Октябрйатсем хӑйсен вожатӑйӗ—ленинла комсомол ваљљи хаклӑ парнесем хатӗрлеҫҫӗ. Вӑл парнесем хушшинче—илемлӗ тӗрӗсем, скуљптурӑсем т. ыт. пулаҫҫӗ.

Хаљхи вӑхӑтра шкулта оборонӑ ӗҫӗ те вӑйланат̆. ЮВС, ВС тата ГСО значкисӗсем хатӗрлес тӗлӗшпе икӗ кружок ӗҫлет. ПВХО тата ГСО кружокӗсем организациленӗ.

Л—Й.

Вӑрҫӑлӑ турӑсӑрсен сойузӗн хула совечӗн пленумӗ

Ҫентябӗрӗн 22-мӗшӗнче Шупашкарти ВТС хула совечӗн черетлӗ пленумӗ пулса иртрӗ. Пленум ВТС Чӑваш совечӗн II-мӗш пленумӗ йышӑннӑ решенине сӳтсе-йаврӗ. Пленумра ВТС хула совечӗн докладне итленӗ. Доклад хыҫҫӑн тухса калакансем чылай пулчӗҫ. Вӗсем хула совечӗ тӗне хирӗҫле ӗҫлес ӗҫре чылай ҫитӗнӳсем туни ҫинчен чарӑнса тӑчӗҫ. Хулара докладсемпе каласусем пурӗ 120 хут, тӗне хирӗҫле массӑлӑ художествӑлӑ вечӗрсем—4, тӗне хирӗҫле выставкӑсем 2 хут туса ирттернӗ. Вӗсенче пурӗ 6000 ҫын хутшӑнтарнӑ. Тӗне хирӗҫле журналсене ҫырӑнса илекенсен йышӗ те чылайах ӳсрӗ. Тӗне хирӗҫ ӗҫлекенсене хатӗрлес майпа курс организациленӗччӗ. Вӑл курсран 18 ҫын вӗрентсе кӑларнӑ. Курсра вӗреннӗ йулташсем халӗ ВТС йачейкисен ҫекретарӗсем пулса ӗҫлеҫҫӗ, йачейкӑсен ӗҫне чылай аванлатрӗҫ. Сӑмахран, реммехсавӑтри ВТС йачейкин ҫекретарӗ Горьков йулташ час-часах тӗне хирӗҫле темӑсемпе докладсем, каласусем туса ирттерет. Ҫапла—идеалисӑмпа материалисӑм, ҫӑлтӑрсем, фашисӑмпа тӗн т. ыт. ҫинчен те сахал мар уйрӑм ыйтусем лартса каласусем туса ирттернӗ. Горьков йулташ докладсемпе каласусене ирттерме хулари лектӑрсене те йавӑҫтарат̆. Членсен шутне чылай ӳстернӗ. Член укҫисене вӑхӑтра пухаҫҫӗ. Ҫавӑн пекех „Хӗрлӗ кустар" ертелри ВТС йачейки те аван ӗҫлет.

Йулашки икӗ уйӑх хушшинче хулари тӗне хирӗҫле ӗҫе ВТС хула совечӗ начартарах йертсе пыма пуҫларӗ. Йачейкӑ ҫекретарӗсене пухса кӑтартусем пани пулман. Кӗркуннехи тӗн праҫникӗсене хирӗҫ пропагандӑ тӑвассине манаҫа хӑварнӑ.

Пленум пропагандӑ ӗҫне организаци ыйтӑвӗсемпе вӑйлӑрах ҫыхӑнтарса пыма, ӗненекенсем хушшинче тӗне хирӗҫле ӗҫлессине сарма, тӗне хирӗҫле ӗҫлессине советӑн пур членӗсене те йавӑҫтарма хушса хӑварчӗ. Пленум ВТС хула совечӗн председателне Цветков йулташа суйларӗ. Чӑвашсовет пленумӗ йышӑннӑ решенине пленум ырларӗ, ӑна пурнӑҫа кӗртес тӗлӗшпе ҫине тӑрса ӗҫлеме пулчӗ.

Ф. Тимофейӗв.

Совет разведкин вӑйӗ—вӑл халӑхпа уйӑрӑлми ҫыхӑнса тӑнинче

Совет разведки социалисӑмлӑ государствӑна нумай йышлӑ тӑшмансенчен, вӑрттӑн ишӗлтерӳлӗ, сӑтӑрлӑ-диверҫилӗ, шпионла тата террорла чейе меслетсемпе кӗрешекен тӑшмансенчен сыхласа, йавӑр та ответлӑ задачӑна пурнӑҫлат̆.

Совет разведки рабочисемпе хресченсен социалисӑмлӑ государствин ҫивӗч хӗҫӗ пулса тӑрат̆. Вӑл ирсӗр тӑшмансене хирӗҫ—капиталисӑмлӑ государствӑсен генераљнӑй штабӗсемпе разведкисен пирӗн тылри агентӗсене хирӗҫ вирлӗн кӗрешет. Совет разведки—социалисӑм ҫӗнтерсе илнисен шанчӑклӑ хуралӗ—йаланах сыхлӑхлӑ пулнипе фашисла разведкӑна тара кӗрӗшнӗ троцкисла-бухаринла тата буржуалӑ-националисла шпионсемпе ҫынвӗлеренсен пӳтсӗр планӗсене совет халӑхӗ ҫӗмӗрсе тӑкрӗ. Совет халӑхӗ пит пысӑк ҫӗнтерӳ турӗ; вӑл хӑйӗн мирлӗ ӗҫӗ ҫине, пурнӑҫӑн телейлӗ коммунисӑмлӑ стройне тӑвассинчи творчествӑлӑ хавхалануллӑ ӗҫӗ ҫине тӑснӑ предателсен аллисене ыватса йачӗ.

Халӑхӑн чейе те хӑрушӑ тӑшманӗсене хирӗҫ кӗрешес ӗҫре совет разведки тарӑн идейӗлӗхран, большевиксен партин йалавне шанчӑклӑ тытса тӑнинчен, мӗлйуншар совет халӑхӗпе тачӑ, уйӑрӑлми ҫыхӑну тытнинчен вӑй илсе тӑчӗ. Совет государствин каратӗљнӑй органӗсем йаланах, хӑйсем ӗҫлеме пуҫланӑ малтанхи утӑмсенчех, вӗсен тарӑн патриотисӑмӗ ҫине, вӗсен Октяберти Аслӑ ревољуци ҫӗнсе илнисене сыхласа тӑрас ӗҫри паттӑрлӑхӗ ҫине тайанса пычӗ.

Мӗлйуншар массӑсем пулӑшса пынипе совет разведки ревољуци тӑшманӗсен пӳтсӗр шухӑшӗсене уҫса палӑртса тата ҫийӗнчех ҫӗмӗрсе тӑкса пычӗ. Капиталисӑмлӑ государствӑсем пирӗн тыла ӗмӗрсем тӑршшӗ пулса пынӑ опытсене тата сӑтӑрлӑ шпионлӑ ӗҫсен тискер меслечӗсене вӗрентсе хатӗрленӗ агентурӑсем йанӑ пулин те, ревољуцин малта тӑракан задачӗ ҫӗнтерӳлӗн пурнӑҫа кӗрсе пычӗ.

ССР Сойузӗнчи граждӑн вӑрҫин паттӑр ҫапӑҫӑвӗсен тапхӑрӗнче ЧК органӗсем совет халӑхӗпе тарӑн ҫыхӑну тытни ҫинчен калакан примерсем питӗ нумай. Сӑмахран, 1918 ҫулта, Мускавра Покровски общинӑри ҫестра сыхлӑхлӑ пулнипе, есер Савинков йертсе пынӑ контрреволюцилӗ загӑвӑра уҫса палӑртнӑ. Пӗр йункӗртан контрреволюционерсем хӗҫпӑшалла восстани тума хатӗрлени ҫинчен пӗлсе, ҫестра ун ҫинчен ҫав вӑхӑтрах Совет влаҫӗн органӗсене пӗлтернӗ.

1919 ҫулта пӗр ҫар шкулӗнчи фељдшӗр „Национаљнӑй центр" йатлӑ контрревољуцилӗ ҫар организацин загӑвӑрне уҫса палӑртма пулӑшнӑ. Фељдшӗр Дзержинский йулташ патне пынӑ та, ӑна ытти фељдшӗрсем темле контрревољуцилӗ ҫар организацине кӗме илертни ҫинчен каласа панӑ. Социалисӑмлӑ ревољуцийе парӑннӑ совет патриочӗ социалисӑмшӑн хаклӑ та усӑллӑ ӗҫ туса панӑ.

Петроградра контрревољуцилӗ ҫар загӑвӑрӗсенчен пӗрне красноармейец сыхалӑхлӑ пулнипе уҫса палӑртнӑ. Вӑл красноармейец пӗр хӗрарӑм ӳкернӗ хут тӗркӗмне илсе пӑхнӑ, унта чертожсем пулнӑ. Кунта темле пысӑк ӗҫ пытанса тӑнине красноармейец часах сиссе илнӗ. Вӑл ҫав шанчӑксӑр хӗрарӑма арӗслевӗ те ЧК органне илсе кайнӑ. Ҫапла вара питӗ анлӑн шухӑшласа хунӑ контрревољуцилӗ ҫар загӑвӑрӗн йӗрӗсем совет разведкин органӗсен аллине лекнӗ. Иут ҫӗршыв державин ҫак ӗҫ тӑрӑх арӗсленӗ шпионӗ: „Ӑнсӑртлӑх пулман пулсан, есӗр мана тытайас ҫукчӗ", тенӗ.

— Йанӑшаттӑр,—ответленӗ Дзержинский шпиона хирӗҫ.—Массӑсем пире пулӑшса пымаҫҫӗ пулсан, загӑвӑра уҫса палӑртасси ЧК ӗҫӗ ҫеҫ мар, пӗтӗм ӗҫҫыннисен ӗҫӗ пулнине кашни рабочи, кашни красноармейец ӑнланмасӑт̆ пулсан, унчух сирӗн хӗрӗр хут тӗркӗмӗ ӳкерсе хӑварни загӑвӑра уҫса палӑртасси патне илсе ҫитермен пулӗччӗ. Сирӗн хӗрӗр хут тӗркӗмне ӑнсӑртран ӳкерсе хӑварнӑ, анчах красноармейец ӑнсӑртран мар интересленнӗ унпа, ӑнсӑртран мар кӑнӑҫсӑрланнӑ тата ӑнсӑртран мар сирӗн хӗре арӗсленӗ. ЧК вӑйӗ ҫакӑнта пулса тӑрат̆ те ӗнтӗ.

Дзержинский йулташ хӑйӗн ҫав сӑмахӗсемпе совет разведкин органӗсем тайанса пынӑ тата хаљ те тайанса пыракан класлӑ ӗҫ… [illegible] тарӑн шухӑшпа каласа тата хакласа панӑ.

Ленин 1919 ҫулхи декабӗрте Пӗтӗм Роҫҫийӑри Советсен VII-мӗш Сйесӗнче каланӑ сӑмахра йут ҫӗршыв разведкисен нумай хисеплӗ загӑвӑрӗсене ревољуцин чи критикӑлӑ тапхӑрӗсенче ҫӗмӗрсе тӑкни саккунлӑ пулни ҫинчен уйрӑмӑнах вӑйлӑн палӑртса хӑварнӑ.

Граждӑн вӑрҫин йавӑр кунӗсенче, шӑлҫӑварӗсем таранах хӗҫпӑшалланнӑ интервентсем ҫӗршыва йӗритавра хупӑрласа илнӗ вӑхӑтра тата контрревољуцилӗ загӑвӑрсемпе шпионажсем саралнӑ вӑхӑтра, Ленинпа Дзержинский ӗҫҫыннисене пурне те шпионажа хирӗҫ кӗрешме, шпионсене, сӑтӑрҫӑсене, диверсантсене хирӗҫ сисӗмлӗхе икӗ хут ӳстерме, сыхлӑхлӑ пулма чӗнчӗҫ. Хӗрлӗ Ҫар граждӑн вӑрҫин фрончӗсенче ҫӗнтерӳ тунинче те халӑхӑн ревољуцилӗ сисӗмлӗхӗ чи кирлӗ условисенчен пӗри пулса тӑчӗ.

Йут ҫӗршыв разведкисем ревољуцие сыхлакан ҫивӗч хӗҫе—совет разведкине мӑкатма пӗрхут ҫеҫ мар хӑтланса пӑхрӗҫ. Вӗсем унта хӑйсен агентчӗсене йачӗҫ. Совет халӑхӗн тӑшманӗсем—троцкисла-бухаринла шпионсемпе диверсантсем, пролетари диктатурин каратӗљнӑй органӗн аппаратне Йагодана тата унӑн хӳрисене лартнипе пирӗн каратӗљнӑй органа ӗҫлейми туса хума шутланӑ.

Анчах халӑхӑн пӳтсӗр тӑшманӗсен карттине ҫапса аркатнӑ.

Партин Сталинла Тӗпкомӗ, халӑхсен ҫулпуҫӗ Сталин йулташ хӑй йертсе пынипе тӑшмансен усал планӗсене уҫса палӑртнӑ. Пирӗн Совет разведки Сталинла Нарком Йежов йертсе пынипе ирсӗр тӑшмансене ҫӗмӗрсе тӑкрӗ, хӑйӗн органӗсене предателсенчен тасатрӗ тата фашисла ҫынвӗлеренсене, шпионсене, диверсантсене, троцкисла-бухаринла фашисла йытушкӑнне вӗлермелех ҫапла салатрӗ.

Совет разведки Ленин—Сталин партийӗшӗн, коммунисӑм йалавӗшӗн, совет халӑхӗшӗн вӗҫне ҫитийех шанчӑклӑ. Совет разведки массӑсемпе тачӑ ҫыхӑнса тӑрат̆, ҫавӑнпа ӑна никам та ҫӗнтерейместь.

ССРС Тӗпӗҫтӑвкомӗн ларӑвӗнче 1937 ҫулхи йулӗн 27-мӗшӗнче каланӑ сӑмахӗнче Н. И. Йежов йулташ капиталисӑмлӑ разведкӑпа совет разведки хушшинчи уйрӑмлӑх ҫинчен питӗ лайӑх каласа пачӗ.

„Капиталисӑмлӑ тӗнчере,—тет Йежов йулташ,—разведкӑ органӗсем государствӑ аппарачӗн ӗҫхалӑх массисем чи курайман пайӗ пулса тӑраҫҫӗ, мӗншӗн тесен вӗсем пуҫ пулса тӑракан капиталиссен пӗчӗк ушкӑнӗн интересне хӳтлесе тӑраҫҫӗ. Пирӗн, пӗтӗмӗшпех урӑхла, совет разведкин органӗсем, государствӑ хӑрушсӑрлӑхӗн органӗсем совет халӑхӗн интересӗсене хӳтлесе тӑраҫҫӗ. Ҫавӑнпа та вӗсене пӗтӗм совет халӑхӗ тивӗҫлипе хисеплет, тивӗҫлипе йуратать".

Совет разведкин органӗсем Николай Иванӑвич Йежов йертсе пынипе йут ҫӗршыв разведкисен пӳтсӗр агентурине ҫӗмӗрсе тӑкас тӗлӗшпе тунӑ историлӗ пысӑк ӗҫе совет халӑхӗсен анлӑ массисем пулӑшса пынипе ҫеҫ тума пултарнӑ. Фашисӑм тӑрҫисем—троцкиссем, бухаринецсем, буржуалӑ-националиссем, есерсем тата меншевиксем, пурте пӗрле пӗр вараланчӑк ирсӗр чӑмӑра пӗрлешнӗскерсем, пирӗн тӑван ҫӗршыва пысӑк хӑрушлӑх кӳме пултарнӑ. Ҫакӑ сиссе, чаплӑ совет разведкине пулӑшас ӗҫе рабочисем, хресченсем, служащисем, совет интеллигенцийӗ хутшӑнчӗҫ. Совет разведки совет патриочӗсен мӗлйуншар куҫӗсемпе хӗҫпӑшалланчӗ, вӗсем ӑна вӑй пачӗҫ тата никам ҫӗнтерейми туса хучӗҫ.

Государствӑ хӑрушсӑрлӑхӗн органӗсем совет патриочӗсен сигналӗсем тӑрӑх шпионсен, диверсантсен тата террориссен ҫӗлен йависене уҫса палӑртни ҫинчен, халӑх тӑшманӗсен ишӗлтерӳлӗ пӳтсӗр ӗҫӗсене чарса лартни ҫинчен вӗҫӗ-хӗррисӗр нумай примерсем илсе кӑтартма пулат̆.

Ака хӑшпӗр характӗрлӑ примерсем.

Пӗр ҫар савӑчӗн цех маҫтӑрӗ опытлӑ самољота пӑхнӑ чух бензин филтрӗн ӑйӗнче кӑвак чул тӗслӗ пӑр тупни ҫинчен пӗлтернӗ. Ҫав пӑра анализ туса пӑхсан, вӑл азот йӳҫекӗлӗ пӑхӑрпа хутӑш пулни паларнӑ; вӗҫев вӑхӑтӗнче вӑл самољота ҫӗмӗрӗлтермеле пулнӑ. Маҫтӑр сигналӗ тӑрӑх НКВД органӗсем тӗрӗслесе пӑхсан, вӑл савӑтра йут ҫӗршыв заданийӗ тӑрӑх ӗҫленӗ сӑтӑрлӑ-диверҫилӗ организаци тупнӑ.

Рйазаљ облаҫӗнче пӗр колхоз колхозници, колхозра сӑтӑрлӑ-диверҫилӗ ӗҫсем туса пурӑннӑ, тырпулӑна, выљӑхсене т. ыт. те пӗтерсе пурӑннӑ кулаксен ушкӑнне тӑрӑ шыв ҫине кӑларма пулӑшнӑ.

Горький облаҫӗнче елеватӑр тунӑ ҫӗрте ӗҫлекен рабочи Молотӑв йачӗпе йанӑ ҫырӑвӗнче строителствӑра сӑтӑрлӑ ӗҫсем тунине асӑрхани ҫинчен ҫырса пӗлтернӗ. Ҫавӑн хыҫҫӑн тӗрӗслесе пӑхсан, унта сӑтӑрҫӑсен ушкӑнне тупнӑ, вӑл ушкӑна шургвардеец пулнӑ ҫын йертсе пынӑ.

Йакутри химик-лаборантка сигналӗ тӑрӑх, НКВД органӗсем Йа-

Волкăв бригадин ĕçĕсем

Енĕшпуçĕнчи (Вăрмар р.) „Енĕш" колхозăн виççĕмĕш бригадине комсомолец И. Волкăв йулташ йертсе пырать. Вăл бригадирта пĕрремĕш çул кăна ĕçлет пулсан та, бригадăри ĕçе лайăх организациленĕ, пур ĕçре те ытти бригадăсенчен малта пырать. Бригадă тырпулсене уйран тăккаламасăр кĕске вăхăтрах пуçтарса кĕчĕ, авăн çапса пĕтерне.

Бригадă членĕсем хушшинче стахановла ĕçлекенсем чылайăх хутшăнчĕç. М. Осипăвă, М. Йегорăвă, Й. Йегорăвă, Й. Ивановă колхозницăсем колхозра пысăк тухăçлă ĕç маçтăрĕсем шутланаççĕ.

Й. Ивановă— тăлăх çитĕннĕ хĕр. Колхозра тăрăшса, тӳрĕ ĕçленипе пуйăн пурнăçпа пурăнакан пулчĕ. Вăл кăçал Волкăв бригадинче машиновед пулса ĕçлерĕ. Кулленхи нормăна 168 процент таран тултарса пычĕ.

Волкăв йулташ комсомол 20 çул тултарнине йалхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçленипе кĕтсе илме обйазатĕлствă илнĕ пулнă. Халĕ вăл хăйĕн обйазатĕлствине пурнăçа кĕртнĕ. Кĕракине пысăк пахалăхпа ирттернĕ. Государствă умĕнчи парăмсене парса татнă. Кĕрхи çĕртме планне тултарнă.

Волкăв кăçал пĕр пĕччен 457 ĕçкунĕ, унăн çемйи 443 ĕçкунĕ тунă. Волкăв çемйи кăçал çĕнĕрен пӳрт лартрĕ, ĕне туйăнчĕ.

В. Алендейĕв.

Çĕрулми илекен савăтра

ТРАК. „Большевик" крахмал савăтне Трак, Ишлей, Шăхасан, Çĕрпӳ, Елĕк районĕсенчи колхозсен çĕрулми памала. Çентаберĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа колхозсем çĕрулми леççе пама тытăнчĕç. Уйрăмах, Шăхасан, Трак районĕсенчи колхозсем государствăна васкавлăн çĕрулми параççĕ. Анчах, çĕрулми леçме пыракан колхозниксене савăтра кĕтсе илме тĕплĕн хатĕрлен менни палăрать.

Савăта пымалли çулйĕрсене йусаман, çавăнпа лавсемпе пыма йăвăртарах, çавнашкалах савăтра çутă çук.

Крахмал савăтне кунсерĕн 100 лава йахăн пырса тăрать. Апла пулсан та, колхозниксем хушшинче културлă-массăлă ĕçе йĕркелемен. Савăтри клуб пуçлăхĕ Богатырйов ку вăхăтчен те колхозниксем хушшинче пĕр калаçу та ирттермен, хаçат журналсем вуласа паман. Столовайа тата ытти çуртсене пачах илемлетмен, хăшпĕр кунсенче пысăк черетсем пулаççĕ. Савăтри профсойуз комитечĕпе пуçламĕш парторганизацин малтанхи кунсенчи çитменлĕхсене халех пĕтерме тăрăшмала.

Г. Закамский.

Малтан парса татрĕç

ÇĔРПӲ. Анатри Кипекçи йалсоветне кĕрекен „Ĕмĕт", „Çурла" колхозсем государствăна тĕштырă тăратас, машинă-трактăр станцине натурплатă тыррине парас йенĕпе тăрăшса ĕçлерĕç. Çак колхозсем малтанхи заповеде— государствăна тырă тăратассине ытти колхозсенчен малтан пурнăçа кĕртрĕç, çавнашкалах МТС-не натурплатă тыррине парса татрĕç.

Икĕ колхозĕнче те пахча-çимĕçсене пуçтарса кĕнĕ. „Ĕмĕт" колхоз государствăна 482 центнер пахча-çимĕç парса обйазатĕлствăна пурнăçа кĕртнĕ. Кантăра шыва хутса пултарнă, халь государствăна сӳс пама хатĕрленеççе.

В. Дмитрийĕв.

Çитес çулшăн аш-какай параççĕ

Оринина йалсоветĕнчи (Тутаркас р.) „Хĕрлĕ Сормăвă" колхозăн сĕт-çу ферми государствăна аш-какай тăратассин 1938 çулхи планне йăлтах пурнăçланă. Плана вăхăтра тултарнăшăн колхозниксене 732 килограм ль отă панă. Уйрăм колхозниксем (А Иванов, И. Капустин, Ф Пакушкинă) государствăна çитес çулшăн аш-какай пачĕç.

М. Григорйĕв.

Авăн çапса пĕтерне

Кăçал Вăрмар йалсоветĕнчи (Çĕрпӳ р.) „КИМ" колхоз йалхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра, пысăк пахалăхпа туса пычĕ. Тырпулсене уйран пуçтарса кĕнĕ хыççăнах авăн çапма тытăнса, çентаберĕн 15-мĕшĕнче пĕтернĕ. Халĕ вăрлăхлăх тата страховкă фончĕсем вальли уйăрса хунă тырра тепĕр хут алаçа тасатма тытăнаççĕ. Колхозниксенчен пĕр пайĕ çĕрулми кăларнă çĕрте ĕçлет.

„КИМ" колхоз государствă умĕнчи парăмсене пĕтĕмпех парса татнă.

В. Соколов.

Призывниксем—чи лайăх стаханăвĕцсем

Шупашкарти кирпĕч савăтĕнчи рабочисемпе служащисен коллективĕ çак кунсенче призывниксене—чи лайăх стаханăвĕцсене—Александр Покровский тата Павел Киселйов йулташсене Хĕрлĕ Çара ăсатать.

Тавата çул каялла савăта пырса кĕнĕ чухне А. Покровскин нимĕле квалификаци те пулман. Вăл механисăмсемпе хытă интересленнĕ, тӳрĕ кăмăлпа тăрăшса ĕçленĕ. Покровский йулташ савăтра ĕçленĕ чухне комсомола кĕрет. Ăна ответлă ĕç параççĕ, вăл машинист пулса ĕçлет.

Савăта виçĕ çул каялла килсе кĕнĕ Павел Киселйовăн пурнăç çулĕ те çавăн пекех. Кунта вăл квалификацилĕ слесăр пулса тăнă, комсомола кĕнĕ.

Савăтри рабочисен коллективĕ Хĕрлĕ Çара çавăн пек пултарулă çамрăксем панăшăн тивĕçлипех мухтанать.

Лукинский.

Октабĕр уйавĕ умĕнхи социалисăмла ăмăрту

Авторемонтнăй савăт тир-сăран савăчĕпе ăмăртăва тухрĕ

Шупашкарти авторемонтнăй савăтри рабочисемпе инженерлă-техниклă работниксем Октабĕр уйавне пысăк хаваслăхпа хатĕрленеççĕ. Савăт коллективĕн çентаберĕн 23-мĕшĕнче пулса иртнĕ пухăвĕ Деткомиссин Шупашкарти хапрăкĕнчи рабочисем ăмăртăва тухма чĕннине çӳтсе-йавнă хыççăн çулталăкри плана декаберĕн 15-мĕшĕнче тултарма, Шупашкарти тир-сăран савăчĕпе социалисăмлă ăмăртăва тухма йышăнчĕ.

Савăт коллективĕ хăйĕн умне Октабĕр уйавĕччен стаханăвла ĕçлеме тытăнас тĕллев лартать. Халĕ савăтра ĕçлекен 86 çынтан стаханăвĕцсем 42 çын, ударниксем 25 çын шутланаççĕ. Вĕсем пурте нормăна ытлашшипех тултарса пыраççĕ. Стаханăвец Горьков йулташ Октабĕр уйавĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса ĕçлесе нормăна 250 процент тултарса ĕçлеме пулчĕ. Çавнашкалах Кададынцĕв йулташ нормăна 400 процентран кайа мар тултарма сăмах пачĕ.

Рабочисен, инженерлă-техниклă работниксен политикăлă активлăхĕ те ӳссех пырать. Кашни рабочи куллен пулса пыракан калаçусене хутшăнать, кашни рабочи ПСК(б) Парти историйĕн Кĕске курсне вĕренме тăрăшать.

Çулталăкри плана Октăбĕр уйавĕ тĕлне тултарассишĕн

Шупашкарти спирт савăтĕнче ĕçлекенсем хушшинче Октабер уйавĕ умĕнхи социалисăмла ăмăрту сарăлсах пырать. Çак кунсенче пулса иртнĕ стаханăвецсемпе рабочисен производствăлă канашлăвĕ çулталăкри плана Октабĕр уйавĕччен тултарма обйазатĕлствă илчĕ.

Хальхи вăхăтра савăтра 80 стаханăвĕц кашни кунах хăйсен нормине ирттерсе тултараççĕ. Вăл шутран çурри ытла хĕрарăмсем. Акă, сăмахран, газливальщицăсем: М. Пегайĕвă, К. Богданавă, етикетчицă Е. Йегорăвă нормăна йалан ах 123 процентран кайа мар тултараççĕ. Аппаратчицăсем: П. Краснова, В. Чуркиvă йулташсем те нормăна 115 процент ытла тултараççĕ.

Савăтра 154 çын ĕçлет. Вĕсенчен 130-ше Октабĕр уйавĕ умĕнхи социалисăмла ăмăртăва хутшăнса татăклă обйазатĕлствăсем илнĕ. Рабочисем обйазатĕлствисене мĕнле пурнăçа йертсе пынине кăтарту хăмисем çине çырса пыраççĕ.

Савăт Йăранскри тата Мурмри савăтсемпе ăмăртса ĕçлет. Çак кунсенче Йăранскри савăтран ăмăрту догăвăрне тĕрĕслеме бригадă килмеле.

Лукин.

Инĕ çул ĕçленĕ хыççăн

Икĕ çул каялла Липăвкăри (Турхан р.) Ленин йачĕпе тăракан ертеле пĕр хĕрача ĕçе кĕме пынă. Хĕрачан производствăра ĕçлес хаваслăх çав тери пысăк пулнă.

—Мĕн ĕçлеме пултараттăр?- ыйтнă унран правлени председателĕ.

— Кирек мĕнле ĕçе те йурать,— тенĕ хĕрача.

Çамрăк Зойă Йегорăвăна малтанах кочегарсен отделенине вутăсем йатнă çĕре йанă. Ку ĕçре 6 уйăх ĕçлесен ăна весовщике куçараççĕ. Йегорăвă йулташ кунта та тимлесех ĕçлет, кăçхине вĕренет. Хăшпĕр чухне пушă вăхат тупăнсан станочниксем патне кайса вĕсен ĕçĕпе паллашать, ыйтса пĕлет.

Вăхăт малала кайнă. Зойă та малала ӳснĕ. Кăçал йанвар уйăхĕнче ăна тата çĕнĕ ĕçе—станокпа ĕçлеме лартаççĕ. Кĕске вахат хушшинчех Йегорăвă йулташ стружкă тăвас техникăна алла çавăрса илет. Халĕ ĕнтĕ вăл ĕç нормине ытлашшипех тултарса пырать. Çменара 832 килограм стружкă туса кăлармала пулсан, Зойă 1500—1664 килограм туса плана 200-шер процент тултарать. Простой, брак тăвассине пачах пĕтерчĕ. Вăл туса кăларакан продукци пахалăхĕ лайăх.

Халĕ Зойă Йегорăвă Октабĕр уйавне хатĕрленнĕ май тата тимлĕрех ĕçлеме пуçларĕ.

И. А.

Чукунçул çинчи „сайра екземплйар"

Рабочисем кăнтăрлахи апат тăваççĕ. Çав хушăрах пайанхи ăнăçулă ĕç çинчен, пĕр кунхи нормăна кантăрлаччченех тултарни çинчен хавхаланса калаçаççĕ. Вĕсен пурин те пĕр ĕмĕт, пĕр шухăш—чукунçулне октаберĕн 1-мĕш тĕлне туса çитерсе вăхăтлăх експлоатацине парасси Кун пирки Ишлей патĕнчи участкăра ĕçлекенсем пĕри те иккĕленмеççĕ. Хамăр панă обйазатĕлствăна пурнăçа кĕртетпĕрех, теççĕ.

Сасартăк палаткă алăкĕ хыттăн туртăнса уçăлать.

— Аçта кунта Соçнин?—тесе кăшкăрнă май, урлă-пирлĕ пуçкаласа кĕрсе тăрать пĕр чăрсăр çын. Унтала та кунтала тинкерсе пăхать вăл.—Хăшĕ пулать кунта Соçнин хушаматлă деçатник?!

— Ху кам пултăн-ха есĕ?—ыйтаççĕ унтан.

— Коçтин хушаматлă епĕ!—тет вăл.—Александр Иванăвич йатлă.

— Мĕн тума кирлĕ вара сана деçатник?

— Кирлĕ вăл мана. Епĕ рабочи. Кунта, 11-мĕш километртра бригадир пулса çичĕ кун хушши ĕçлерĕм.

— Ну, ĕçлерĕн... Вара мĕн-ха унщăн?

— Нимĕн те мар,—терĕ чăрсăр çын.—Мĕн чухлĕ ĕçленине шута илтерес тетĕп. Деçатникрен квитанци илсе кайас тетĕп... Апат çийетĕр и есĕр?

— Апат çийетпĕр. Санăн та çийес килет-им?

— Килет çав... [illegible] ха кашăк.

Ăна кашăк пар[illegible]. Çиме ларать. Апата мухтать. Ка[illegible] тытнă аллине сулла-çулла к[illegible]çать:

— „Хĕрле флот" [illegible]лхозран еп. Пĕлетĕр пуль, Ишлеи районĕнче пур ĕçре те кайа йулса пыракан колхоз вăл. Çапах çак çиремкунлăха хутшăнас терĕмĕр пулать. Председателĕ : пирĕн Кудрйашов хушаматлă. Аван çын. 12 çын йамалаччĕ чукунçул çине, 4 çын йачĕ. Мана бригадир турĕ. Тултăм. 4 кун хушшинче тултармали ĕç нормине 7 кун хушшинче тултарчĕ ман бригадă. Аван ĕçлерĕç бригада членĕсем. Уйрăмăнах хама палăртса хăварни кирлĕ.

— Ӳсĕр мар-и есĕ? — ыйтрĕçĕ унтан.

— Ӳсĕр еп. Тунмастăп Йаланах тенĕ пек ĕçетĕп. Çапах ураран ӳкместĕп.

Ăнланчĕç рабочисем. Ку мĕнле çын иккенне уççăнах туйса илчĕç. Çакнашкал сӳпелтĕк пирĕн чукунçул çинче питĕ те „сайра екземплйар" терĕç. Унашкал „екземплйарсем" пачах çук пулсан татах та аван пулĕччĕ. Çапах та пур вĕт-ха вĕсем. Сăмахран, çак сӳпелтĕке бригадир туса йаракан „Херлĕ флот" колхозра председатĕл пулса ĕçлекен Кудрйашов хушаматлă „екземплйар" та пур.

Митта П.

Агит-вакун организацилерĕ

Строительствă управленийĕ чукунçул çинче ĕçлекенсем хушшинче культмассăлă ĕçе сарса йарас тĕлĕшпе агит-вакун организацилерĕ. Агит-вакун çентаберĕн 18-мĕшĕнче участкăсемпе околоткăсене тухса кайрĕ. Çак вăхăтра вăл виçĕ вырăнта: Ишлей районĕнче тата 3-мĕшпе 2-мĕш участкăсенче ĕçлекенсем хушшинче тĕнчери лару тăру çинчен 5 доклад, стаханăвла йухăм çинчен 3 калаçу туса ирттернĕ, 4 номĕр çтена хаçачĕ кăларнă.

Н. Соколов.

Çитĕннисен тӳллимар вăтам шкулĕсем

Кăçалхи çул Вăрмар районĕнче çитĕннисене вĕрентекен тӳллимар вăтам шкулсем 3 çĕрте—Спортинвентăр хапрăкĕнче, Аслă Пинерпе Аслă Чак йалĕсенче ĕçлемеле. Вĕсенче пурĕ 120 çын вĕренмеле пулать. Çак шкулсене вĕренме кĕрес текенсем темĕн чухлех. Шкулсенче вĕренӳ октаберĕн 1-мĕшĕнче пуçланмала.

Çавăн пекех районра вăтам шкулсем уççан та аван пулмала. Райçутĕç пайĕн ку тĕлĕшпе интересленмеле.

В. Алендейĕв.

Пирвайхи утăмсем

ТĂВАЙ. Иртнĕ çулсенче Тăвай районĕ укçа-тенкĕ пухас ĕçре питех те кайа йулса пынă. Кăçал та ку тарана çитиччченех район финанс планне тултарас ĕçре квартăлтан квартăла йулса пынă. Августăн 20-мĕш тĕлне III-мĕш квартăл финанс планне мĕн пурĕ те 21 процент ытларах кăна тултарнă пулнă.

Райфинцай пуçлăхĕ пулса ĕçленĕ Иварбейĕв укçа-тенкĕ пухас ĕçе тивĕçлипе йертсе пыраймăн. Вăл финанс çекцисемпе, финанс активĕпе тата налог агĕнчĕсемпе çыхăнса ĕçлемен. Налог агĕнчĕсем мĕнле ĕçленине те пĕлмен. Налог агĕнчĕ П. Никăнăв 2 уйăх хушшинче те 500 тенкĕ çеç пухнă пулнă. Çавăн пекех налог агĕнчĕ Томаков та вим ĕçлемесĕр пурăннă. Налог агĕнчĕсен канашлăвĕсем сайра хутра çеç пулнă.

Халĕ райфинпай пуçлăхĕнче Биктимирăв йулташ ĕçлет. Вăл ĕçлеме пуçланăранпа укçа-тенкĕ пухас ĕç вăйланчи систет. Вăл начар ĕçлекен налог агĕнчĕсене ĕçрен хăтарчĕ.

Çентаберĕн 20-мĕш тĕлне район III-мĕш квартăл финанс планне 89 процент ытла тултарчĕ. Вырăс Нарваш[illegible] агент Максимăв укçа-тенкĕ пухас плана çентаберĕн 15-мĕш тĕлнех 105 проц. тултарчĕ. Вăл кулленех финанс активĕпе пĕрле ĕçлет, колхозниксене налог укçи аçта кайни çинчен тĕплĕн ăнлантарса парать. Çавăн пекех налог агĕнчĕсем—Вальгин, Ишмаков, Суркин, Козлов йулташсем те аван ĕçлеççĕ.

В. Илйин.

Зайом укçи пухасси начар пырать

ВĂРНАР. Зайом укçи пухас ĕçре хăшпĕр колхозсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Малтикас, Вăрман Шăхаль, Ишлей, Йĕрмошкă, Чăрăш Хирлеп колхозĕсенчи колхозниксем çентаберĕн 20-мĕшне зайом укçине пĕтĕмпех тӳлесе татнă.

Малтикасри „Пĕтлешӳ" колхозри зайом уполномоченнăйĕсем Николайĕв, Кондратйĕв, Александрăв, Фирсăв йулташсем подпискă тăрăх укçа пухассипе пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлерĕç. Çапла вара вĕсем кашни кун 200-шер тенкĕ ытла пухса пынă.

Çав вăхăтрах Упнер, Елмен, Сунар, Зеленовкă, Кăмаш, Пăвайль, Кăмпай, Йангорчино, Хорисор колхозĕсенче зайом укçи пĕр пус та пухман. Йангорчино йалсоветĕнче зайом уполномоченнăйĕсем 12 çын. Вĕсем зайом укçи пухас тĕлĕшпе пачах та ĕçлемеççĕ.

Çак çитменлĕхсене пула район зайом укçи пухас ĕçре йулса пырать. Çентаберĕн 21-мĕшне илсен зайом укçи пухассине районĕпе 17 процент анчах тултарнă. Вăл шутран рабочисемпе служащисен йенĕпе 17 процент, колхозниксен йенĕпе 18 процент, йединоличниксен йенĕпе 0,2 процент.

Ан. Крислов.

Виççĕмĕш квартăлта укçа-тенкĕ пухмали плана тултарас ĕç мĕнле пынине кăтартакан СВОДКĂ

(Çентаберĕн 21-мĕшне)

РАЙОНСЕМ	(Тултарнă процентпа)
Улатăр	72,8
Елĕк	62,9
Патăрйел	63,1
Вăрнар	75,9
Йĕпреç	48,2
Ишлей	53,3
Канаш	56,7
Куславкка	52,6
Хĕрлĕ Чутай	58,2
Кувакинă	97,4
Сĕнтĕрвăрри	54,3
Пăрачкав	76,0
Турхан	66,5
Тутаркас	68,2
Трак	93,3
Вăрмар	62,2
Çĕрпӳ	59,8
Шупашкар	70,5
Шăмăршă	62,7
Шăхасан	77,1
Шăнкăртам	123,1
Çĕмĕрле	49,1
Йĕтĕрне	64,6
Йĕлчĕк	92,5
Тăвай	89,1
Хуласем:	
Улатăр	63,8
Канаш	64,4
Шупашкар	71,1
Пĕтĕмпе	66,8

Бюджетри çирĕп йĕркелĕхшĕн

1938 çулти малтанхи çурçул бюджетне тупăш йенĕпе 48,3 процент, расхут йенĕпе 45,3 процент тултарнă. Халăхран укçа-тенкĕ пухмали плана 75 процент кăна тултарнă. Йединоличниксенчен пухмала йулнă укçасене шыраса илесси халĕ те начар пырать.

Государствă тупăшĕ (таварçаврăнăш çине хураккан налог т. ыт. те) йенĕпе илсен плана тахçах та çителĕксĕр тулса пырать. Çакăр продукцисем йенĕпе кăна çур çул хушшинче 6.720 пин тенкĕ пухса çитереймен.

Тупăш йенĕпе илсен плана çитерлĕксĕр тулса пынине пула Чăваш республикĕн тата районсемпе йалсен бюджечĕсене валли çур çул хушшинче 4 мĕлйун тенкĕ ытла укçа пухса çитереймен.

Социаллă-культурălă ĕçсене ирттерме 1937 çулта кирлĕ чухлĕ укçа парса тăман. Кăçал та Чăваш АССР Финанс, Çутĕç, Çĕреç тата Сывлăха сыхлав халăх комиссариачĕсен тата Елĕк, Хĕрлĕ Чутай, Йĕпреç, Йĕлчĕк райĕç ăзкомĕсен айăпĕпе тивĕçлине парса тăми çукха.

Финанс Халăх Комиссариачĕ бюджет дисциплинине çирĕплетме тăрăшмасть.

Укçа-тенкĕ пухмали плана тултарас тата йединоличниксем йенĕпе пухмали йулнă тӳлевсене шыраса илес тĕлĕшпе Вăрмар, Ишлей, Йĕпреç, Патăрйел, Сĕнтĕрвăрри, Канаш районĕсенче чăтма çук йалăх ĕçлеççĕ. Çакна пула ĕнте социаллă-культурăлă ĕçсене ирттерме тата халăх хуçалăхĕнчи ытти ĕçсене туma укçа-тенкĕ парса тăрасси пурнăçа кĕрсе пыраймасть.

Виççĕмĕш квартăл планне тултарассишĕн, малтан пухăнмасăр йулнă укçасене пĕтĕмпех пухса çитерессишĕн тимлĕн ĕçлени кирлĕ.

Вут-кăварпа кĕрешес ĕçе вăйлатмала

Т.-Пӳртлĕри (Турхан районĕ) „Ударный" колхозра пайан кунччен те пушарпа кĕрешессине вăйлатмаççĕ. Игем çинче тырă хунă кĕлетсем патĕнче вут-кăвартан сыхă тăрассипе кирлĕ ĕçсем туман. Пушар насусĕ патĕнче 15 çулхи ачана çеç тăрататççĕ Колхоз председателĕнчен Й. Титăвран: —мĕншĕн насус патĕнче 15 çулхи ачана тăрататтăр, пушар тухсассăн 15 çулхискер насуспа пушар патне мĕнле кайма пултарать? тесе ыйтсан: ĕç вăхăтĕнче йепле ĕçлекен рабочине насус патне хăварас, тесе ответ парать.

Игем çинче тырăсем хунă кĕлетсем патĕнче час-часах хăш-пĕр колхозниксем чĕлĕм туртнине курма пулать. Çавăн пекех насус патĕнче витресем çук. Чансем çине тултарнă шыв типсе чанĕ шултăркаса кайнă. Насус патĕнче йĕркелĕ лаша тăратмаççĕ.

Колхоз правленийĕ çак çитменлĕхсене пĕтерес йенĕпе ĕçлемест. Вут-кăвартан сыхă тăмаллине тепĕр хут çавăн пек хăварма йурамасть.

И. Лапшин.

Вĕренме пур йенчен те лайăхланчĕ

Канаш педучилищинче мĕн пурĕ 400 ача вĕренет. Кăçал училищă çĕнĕ те илемлĕ çурта вырнаçрĕ. Студентсем валли те çĕнĕ общежити туса пĕтерчĕç. Культурăлă пурăнма, тăрăшса вĕренме пур условисем те çителĕклĕ. Шурă та таса пӳлĕмсене кашнинех радио кĕртнĕ.

Студентсем çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçлансанах социалисăмлă ăмăртăва хутшăнчĕç. Класпа клас, студентпа студент ăмăртса вĕренеççĕ. Купла пĕрлех студентсем тĕрлĕрен кружоксене хастарлăн хутшăнса ĕçлеççĕ.

Халĕ студентсем хушшинче Осоавиахим билечĕсене улăштарасса тата çĕнĕрен члена илесси сарăлса пырать. Осоавиахим членĕсем пурте ГСО тата ПВХО значокĕсене илнĕ.

Çапла ĕнтĕ студентсен вĕренӳри хастарлăхĕ, вĕсен хаваслăхĕ кулленех ӳссе пыни палăрать.

Л. Шешков.

кутири пĕр савăтра контрреволюцилле шпионлă-диверçиле организаци пулнине тупса палăртнă.

Краматорскри çăкăр пĕçерекен савăтра рабочисемпе служащисен коллективĕ НКВД оргăнĕсене çăкăр савăтĕнче сăтăрлă диверçилĕ шайкăн пӳтсĕр ĕçĕсене тупса палăртма пулăшнă.

Пĕр хаçат работникĕ пĕлтернĕ хыççăн, Азербайджан СС Республикĕн НКВД оргăнĕсем Бакура водопровод тăвас ĕçре сăтăрлă ĕçсем туса пынă контрреволюцилĕ бандăна тупнă.

Воронĕж облаçĕнчи Поворино Борисоглебск станцинче Очкин граждании шифрласа çырнă çыру тупнă та, ăна НКВД-на йарса панă. Çав çырăва вуласа ăнланнă хыççăн, НКВД оргăнĕсем Хопер йухăншыв урлă каçмалли кĕпере сиктерсе йама хатĕрленнине пĕлнĕ тата ăна сиктерсе йарасран çăлса хăварнă.

Йут çĕршыв разведкисен агĕнчĕсене тупса тытас ĕçре пирĕн пограничниксем, рабочисем тата колхозниксем паттăрлăхпа хăйулăх кăтартни çинчен татах та нумай примерсем кăтартма пулать.

Совет разведки сыхлакан ĕç пирĕн тăван çĕршывăн кашни патриочĕшĕн чыслă та хаклă ĕç пулса тăрать.

Совет разведки совет халăхĕн мирлĕ ĕçне, рабочисемпе хресченсен государствин ирĕклĕхне тата никама пăхăнасмарлăхне сыхлать, миршĕн, фашисла вăрçă чĕртсе йаракансене хирĕç кĕрешет. Çавăнпа та ĕнтĕ хăйĕн тăван çĕршывне йуратакан тата унăн тăшманĕсене кураймасăр тăракан кашни совет патриочĕ, пирĕн советсене, колхозсене, партипе совет аппаратне хĕсĕнсе кĕрекен предателсене, тăван çĕршыва пăрахса фашисăма сутăннă çынсене пĕр хĕрхенӳсĕр пĕтерсе тăкас ĕçре совет разведкин оргăнĕсене пулăшасси хăйĕн чыслăран та чыслă ĕçĕ тесе шутлать.

Фашисăма тара кĕрĕшнĕскерсене çĕмĕрсе тăкас çул çинче совет разведки темле пысăк ĕçсем тунă пулин те, халăх тăшмавĕсемпе кĕрешес ĕç пĕтнĕ тесе шутлама йурамасть. Пирĕн çĕршыв капиталисăмлă йĕритавралăхра пурăнать. Социалисăмăн кашни çитĕнӳве, кашни çĕнтерӳне курса, пирĕн çĕршывăн шалти тата тулашри класла тăшманĕсем ытларах урса пыраççĕ. Буржуази пирĕн пата шпионсем, диверсантсем, сăтăрçăсем, çыввĕлерекенсем пачки-пачкипе йарса тăма малашне те чарăнмĕ, тесе вĕрентет пире Сталин йулташ. Буржуази пирĕн çĕршыври çĕмĕрсе такнă клас тăшманĕсен пытанса йулнă, тупса палăртайман хăйпанчăкĕсемпе усă курма малашне те пăрахмĕ. Капиталисăмлă йĕритавралăх çинчен пĕр минутлăха та манма йурамасть!

Йут çĕршыв разведкисем тата пӳтсĕр троцкисла бухаринла фашисла агентурăсем темле чейеле шăвăнса кĕнисене те çĕмĕрсе тăкма пирĕн пĕтĕм совет халăхĕ йалан ах мобилизацилĕ хатĕр тămала.

Совет çĕршывĕн вăйĕ—совет халăхĕ моральлĕ тата политикăлă пĕрлĕхлĕ пулнинче, халăх хăйĕн правительствипе, хăйĕн ленинла сталинла аслă партийĕпе пĕрлĕхлĕ пулнинче. Совет разведкин аслă вăйĕпе никам çĕнтерейменлĕхĕ те—халăхпа государствă хăрушсăрлăхĕн оргăнĕсем хушшинчи пĕрлĕхре, тачă çыхăнса тăнинче пулса тăрать.

М. АЛЕКСАНДРĂВĂ.

Чехословакири лару-тăру

Чехословакире пĕтĕм çĕршывĕпе мобилизаци тунă

Халăхсен патриотисăмлă çĕкленĕвĕ

Чехословаки республикĕн президенчĕ Бенеш çентăберĕн 23 мĕшĕнче пĕтĕм çĕршывĕпе мобилизаци тăвасси çинчен приказ кăларнă. Çара тăма тивĕçлисене 40 çулхисем таран пурне те çара чĕнсе илнĕ. Çавăн пекех лашасене тата пур йышши транспăрта мобилизацилемели туни çинчен те пĕлтернĕ. Бенеш Чехословаки халăхĕ патне воззвани йанă.

Президент чĕнсе каланине тата пĕтĕм çĕршывĕпе мобилизаци тăвасси çинчен кăларнă приказа Чехословакира халăхсем пысăк хаваслăхпа кĕтсе илнĕ. Приказ кăларнă хыççăн тепĕр 30—40 минутран чăссене кайма çынсем автомобилсемпе, мотоциклетсемпе тата çурран вокзалсем патне пынă. Халăхсем çара тухса кайакансене тăвăлăн саламланă.

Çар специалисĕсем хак панă тăрăх, мобилизацине калама çук чаплă иртерне. Чехире, Словакире, Закарпатски Украинăра тата Судет обчăçĕнче çара тăма тивĕçлисем сборнăй пунктсене çĕр проценчĕпех пынă. Мобилизацине пĕтĕм республика тăрăх палăртна срукран икĕ сехет малтан туса пĕтерне. Çара мобилизацилес тĕлĕшпе ĕçлекен аппарат лайăх, пĕр тытăнса тăмасăр ĕçленĕ. Сборнăй пунктсене пынисене регистрацилес, хăш чăçе каймалине палăртас, обмундированисем парас тата вырăнсене çитерме грузовиксем çине вырнаçтарса лартас ĕçе мĕн пурĕ те 30 минут хушшинче туса пĕтерне. Мобилизаци çинчен пĕлтерне хыççăн пĕр 40 минутран Прагăри вокзалсенче кашни пилĕк ултă минутра пĕрре пуйăссем салтаксен ешелонĕсемпе туха-туха кайнă. Чикĕ хĕррине тухса кайакан пуйăссене халăхсем тăвăллăн оваци туса, нацилĕ гимн йурласа ăсатса йанă.

(ТАСС).

Чемберлен Гитлĕрпа тепĕр хут курса калаçнă

Çентăберĕн 23-мĕшĕнче Годесбергра (Германи) Англин премйер министрĕ Чемберлен Гитлĕрпа тепĕр хут курса калаçнă.

Лондăнран пĕлтерне тăрăх, çак тĕлпулу резуљтатсăр пулнă. Чехословаки çине тапăнас сукки çинчен Гитлĕр нимĕнле гаранти те паман.

Англи тата Франци патшалăхĕсен Прагăри посланникĕсем Чехословаки правитĕлствине республикă çине кирек мĕнле вăхăтра та тапăну пулма пултарасси çинчен асăрхаттарнă.

Гитлĕр Чемберлена меморандум панă, унта вăл—октăберĕн 1-мĕш хыççăн çийĕнчех, мĕнпур халăхран нимĕçсем 70 процент ытла шутланакан Судет облăçĕн пур районĕсене те Германи çарĕсемпе йышăнма хăй шухăшлани çинчен пĕлтерет.

(ТАСС).

Штурмовиксемпе генлейнăвĕцсен тапăнăвĕсем

Прагăран пĕлтерне тăрăх, „Судет нимĕçсен легионĕсенчи" генлейнăвĕцсен бандисем тата Германири охранниксем йулашки кунсем хушшинче Чехословаки территорийĕ çине темиçе хутчен те провокацилĕ тапăнусем тунă. Дољни Лихтенваљдра тата Гатра чикĕри хуралсем çине тапăнусем тунă вăхăтра генлейнăвĕцсемпе штурмовиксем гранатăсемпе усă курнă. Вĕсен пур тапăнăвĕсене те сирсе йанă.

Фашисла путчистсене хирĕç татăклă мерăсем йышăнна хыççăн, вĕсем çĕкленĕ пăлхавăн мĕнпур тĕп вучахĕсене пĕтерсе лартнă. Çентăберĕн 23 мĕшĕнче путчистсене, вĕсен алливче пулнă мĕнпур пунктсенчен хăваласа йанă. Генлейнăвĕцсемпе штурмовиксем йенчен вилнисем те, аманнисем те нумай.

Фашисла интервенцсем тапăнма хатĕрленеççĕ

Чехословакине економикă йенчен блокадă туни.—Пољшă уљтиматумĕ

Австрипе Чехословаки хушшинчи чикĕне Германи çарĕсене ил е пырасси чарăнмаст-ха. Австрине Германирен пысăк çар соединенийĕсем пыраççĕ. Çулсем çарсемпе, танксемпе, бронеавтомобилсемпе тата моторизациленĕ артиллерипе тулса ларнă. Çакăнпа пĕр лех тата авиаци вăйĕсене—бомбардировщиксемпе истребителсене те чылайшарăн ăсатаççĕ. Çарсем вĕçĕмсĕр куçса тăни Германипе Австрири халăхсене çав тери шиклентерсе йанă. Мĕншĕн тесен çарсем вĕçĕмсĕр куçса тăни вăрçă ĕçĕсем пуçланасси çывхарнине кăтартса параççĕ.

Германипе Венгри Чехословакине економикă йенчен блокадă тăвассине пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртме тытăннă.

Германи Прагăна Рим, Венă, Лондăн тата Берн хулисемпе телефон тăрăх çыхăну тыттарма чарса лартнă. Германипе Чехословаки хушшинче вуншар линисем тăрăх пуйăссем çӳреме чарăннă. Ељба тата Дунай шывĕсем тăрăх Чехословаки пăрахучĕсене çӳретме чарса лартнă. Венгрире Чехословаки сутăн илнĕ таварсене Чехословакине ăсатассине тытса чарнă.

Пољшăн Прагăри посланникĕ çентăберĕн 23-мĕшĕнче Чехословаки правитĕлствинчен Пољшă правитĕлствин çентăберĕн 21-мĕшĕнче панă нотине хирĕç çийĕнчех ответ пама ыйтнă. Вăл нотăра Пољшă правитĕлстви пољаксем пурăнакан районсене Чехословакирен уйăрса, вĕсене Пољшă çумне пĕрлештерме ыйтнă пулнă.

(ТАСС).

Англипе Францин вăрçă тĕлĕшпе туса ирттерекен ĕçĕсем

Çентăберĕн 23-мĕшĕнче радикалсен тата радикал-социалиссен партин парламĕнтла ушкăн членĕсен делегацийĕ Франци правитĕлствин пуçлăхĕ Даладие патĕнче пулнă. Делегаципе калаçнă чухне, Даладйе çапла каланă: Чехословаки çине вăрçăпа тапăнсан, ун чухне Франци хăйĕн Чехословаки тĕлĕшри мĕнпур обйазатĕлствисене пурнăçа кĕртет,—тенĕ.

Çентăберĕн 24-мĕшĕнче пĕтĕм Франци тăрăх, запасра тăракан хăшпĕр категорисене сборнăй пунктсене пыма хушса çырнă пĕлтерӳсем çыпăçтарса тухнă. Запасра тăракансене мобилизаци тунине—пĕтĕм çĕршыв тăрăх мобилизаци тăвас умĕн хăрушсăрлăх йенĕпе туса ирттерекен йулашки мероприйатисенчен пĕри тесе хаклаççĕ.

Çавăн пекех Англи адмиралтействи те сыхланас йенĕпе татах чылай ĕçсем йышăнна. Нумай çынсене отпускран кайала чĕнсе илнĕ, çар карапĕсенчен хăшне пĕрне вăрçа тухма йăлтах хатĕрлесе çитерне.

(ТАСС).

Тырăсене вырса пуçтарни

Çентăберĕн 20 мĕш тĕлне пĕтĕм Сойуз тăрăх пучахлă тырăсене 83.166 пин гектар вырса пуçтарнă—плана 95 процент тултарнă. Колхозсем плана 95 процент, Совхозсен Халăх Комиссариачĕн совхозĕсем—89 процент, Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн совхозĕсем—93 процент тултарнă. Апат-çимĕç промышлĕнăç Халăх Комиссариачĕн совхозĕсем пучахлă тырăсене вырса пуçтарас плана йăлтах тултарнă.

Комбайнсемпе пуçтарнине те шута илсен, 65.753 пин гектар çинчен вырса илнĕ тырра çапса пĕтерне—вăл пĕтĕмпе вырнă тырăран 75 процент пулать.

Çак вăхăт тĕлнех кĕрхи тырăсене 27.383 пин гектар акнă—плана 76 процент тултарнă. Колхозсем кĕраки планне 76 процент, Совхозсен Халăх Комиссариачĕн совхозĕсем—70 процент, Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн совхозĕсем — 60 процент, Апат-çимĕç промышлĕнăç Халăх Комиссариачĕн совхозĕсем—78 процент тултарнă.

Тутар, Чăваш, Коми АСС Республикĕсем тата Иркутск облăçĕ кĕракине йăлтах туса çитерне.

Çентăберĕн 20-мĕш тĕлне кĕрхи çĕртме 10 424 пин гектар çинче тунă—плана 15 процент тултарнă.

(ТАСС).

Стариксем ăмăртаççĕ

38-мĕш километрта ĕçлекен Кандалăв бригадинчи Ивановпа Максимăв йулташсем иккĕшĕ те 60 çултан иртнĕ. Малтанхи вăхăтра вĕсем нормăна тултарайман. Ĕç вырăнĕсене лайăх организацилене май, хаљ вĕсем çул тӳрлĕтнĕ çĕрте ĕçлесе, плана 110—125 процентшар тултарса ĕçлеме тытăнчĕç. Вĕсем ăмăрту догăварĕ тунă.

Н.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Китай хĕрарăмĕ хăйĕн аманнă ывăлĕпе пӳрт умĕнче ларать, пӳртне Йапони агрессăрĕсен бомбисем çĕмĕрсе тăкнă (Учан-хули).

Сойузфото („Пресcклише")

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

Çентăберĕн 8-мĕшпе 24-мĕш хушшинчи вăрçă ĕçĕсене пăхса тухни

Йулашки вăхăтра Китай çарĕсем Йапони çарне хирĕç калама çук хыттăн тăрса вăрçаççĕ. Йапонĕцсен ĕçĕсем тепĕр йенчен çакăншăн тата йăвăрланса пыраççĕ: вĕсене сăртлă вырăнсенче вăрçма тивет. Ун пек вырăнсенче çар техникипе пысăкăн усă курма май çук. Çавăн пек условисенче йапонĕцсем вĕлерекен газсемпе ытларах усă кураççĕ.

Центрти Китайра Йанцзы йуханшывĕн кăнтăр çыранĕ патĕнче, Йапони командованийĕ операцисене икĕ йеннеле туса пырать: хĕвеланăç йеннеле тата Жуйчан хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнеле тата Цзӳцзйан—Наљчан чукунçулĕ тăрăх. Йулашки вунпилĕк кун хушшинче йапонĕцсем Жуйчан хулинчен 20—25 километр çеç малала кайма пултарнă. Кунта Китай çарĕсем атакăсем тунă çĕртен пĕтĕмĕшлĕ контрнаступлени çине куçаççĕ. Цзӳцзйан—Наљчан чукунçул районĕнче Йапони командованийĕ вунă пин салтака çити илсе пырса тултарнă. Махулин станцийĕ патĕнче çапăçусем пĕрре китайĕцсем çĕнтернипе, тепре йапонĕцсем çĕнтернипе пулса пыраççĕ.

Йанцзы йуханшывĕн кăнтăр çыранĕ патĕнче Китай çарĕсем çав тери хыттăн тăрса вăрçнă пирки, Йапони командованийĕ çав шывăн çурçĕр çыранĕнче хăй çарĕсен ĕçне вăйлатнă, кунта вăрçă ĕçĕсене сарлакан туса пыма пуçланă. Йапонĕцсем, Бейпин—Хаљкоу чукунçулĕ çине тухас шутпа, Лучжоу—Синљйан шоссе çулĕ тăрăх наступлени тума пуçланă. Ку участкăра Йапонин пысăк çарĕсем вăрçаççĕ. Йулашки сведĕнисем тăрăх, вĕсем кунта Хуанчуаљ патне çити малала кайма пултарнă.

Китайăн çыранри артиллерийĕ Йанцзы йуханшывĕ çинче Йапонин çар карапĕсене пурĕ вуннă ытла стройран кăларнă. Вĕсенчен хăшĕсем шыва путнă. Таљцзйачжен районĕнчи пысăк çапăçусем вăхăтĕнче йапонĕцсен ултă кун хушшинче, вилнисемпе аманнисене пĕрле илсен, тăватă пин салтак ытла пĕтнĕ. Йулашки кунсенче фронтран Йапонин аманнă салтакĕсене 15 пин çын таран Шанхайа илсе пынă.

Çурçĕр Китайра фронтăн тĕрлĕ участкисенче Китай çарĕсемпе Йапони çарĕсем хушшинче пысăках мар çапăçусем пулса пыраççĕ. Китайăн 8-мĕш революцилĕ халăх çарĕ йапонĕцсен тылĕнче вăрçса, йапонĕцсене пысăк çухатусем кӳрет. Китай чаçĕсемпе партизансем йапонĕцсенчен хĕçпăшалсем тата вăрçă хатĕрĕсем нумай туртса илнĕ, вăл шутра—пулеметсемпе тупăсем те пур. Шаљси провинцин кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнче йапонĕцсем пĕтĕм фрончĕпех кайала чакса пыраççĕ.

(ТАСС).

Тракри кинотеатр çинчен

Пĕр ик-виç уйăх кайала Тракри ĕççыннисем:

— Тракра хăçан саслă кино пулать ши? Курăвчĕ, тесе калаçатчĕç

Халĕ саслă кино аппаратне илсе килнĕ. Механиксем те пур. Кино-сеанс пулассине пĕлсенех пысăк хаваслăхпа кино курма тухса уттатăн. Билет илетĕн те хĕсĕнкелесе вырăн тупса ларатăн. Кино-сеанс пĕлтерӳре кăтартнă вăхăтран ик-виç сехет кайа йулса пуçланать. Саслă кинокартинă кăтартма тытăнаççĕ. Анчах, пĕр-ик пайне курсан саслă таçта кайса çухалать. Tатах тем чухлĕ вăхăт кĕтсе ларсан зала киномеханик кĕрет те:—Йулташсем, машинă çĕмĕрĕлчĕ, ыран кас кăтартатпăр,—тет.

Иурать, ыранхи каçа кĕтетпĕр. Кино курма пыратпăр. Клуб алăкĕ çинче: „Пайан кино пулмасть, механик Шупашкара кайнă", тесе çырса çапнă. Тепĕр кас татах клуба кайатăн. Кино пуçланчĕ. Чипер курнă çĕртех кăтартма чарчĕç. Механикĕн сасси татах илтĕнме пуçларĕ,—Йулташсем, аппарат пăсăлчĕ, ыран кас çак билетсемпех кĕртетпĕр,—тет. вăл. Тепĕр касхине урăх картинă, билет çĕнĕрен илме тиврĕ.

Тракра çакăн пеккисем сахал мар пулаççĕ Çак кунсенче „Ленин в Октябре" картинăва темиçе кас кăтартса та йĕркелĕ кăтартса пĕтерейменĕç. Çентăберĕн 14-мĕшĕнче „За Советскую родину" кинокартинă кăтартрĕç, ăна та вĕçне çитиех курма пулмарĕ.

Тракра кино кăтартас ĕçе хăçан йĕркелесе çитерĕç-ши?

Ст. Владимирăв.

Испанири фронтсенче

Хĕвелтухăçри фронтра Ебро йуханшывĕн анат йенче çентăберĕн 22-мĕшĕнче хайар çапăçусем пулса иртнĕ. Çапăçусем мĕн тĕттĕм пулаччен пынă. Республикă çарĕсем тăшман атакисене ăнăçлăн сирсе пăрахнă, вĕсем нумай çынсем тыткăна илнĕ тата хĕçпăшалсем те чылай туртса илнĕ. Çапăçусенче пысăк çухатусем тунă пирки, фашиссен ирĕксĕрех çĕнĕ подкрепленисем чĕнмеле пулнă. Çĕнĕрен тепĕр хут хайарран вăрçнă хыççăн, пăлхавçăсем пĕр высотана тытса илнĕ. Республикацĕцсем нумай çынсене тыткăна илнĕ тата Германин икĕ танкне йарса илнĕ.

Гаетăран хĕвелтухăç йенче республикă çарĕсем пăлхавçăсен пĕр батаљйонне йăлтах пĕтерсе хунă. Вăл батаљйон республиканĕцсен позицисем çине атакăланă пулнă.

Республикă авиацийĕ пысăк активлăх кăтартнă. Вăл пăлхавçăсен çарĕсем çине бомбăсем пăрахнă тата пулеметсенчен пенĕ. Сывлăшри çапăçура республикă љотчикĕсем фашиссен пилĕк самољотне персе антарнă.

Республиканĕцсен виçĕ истребитĕл пĕтнĕ.

Центрти фронтăн Естремадурă участкинче Еспиељ районĕнче республиканĕцсем пер йала тытса илнĕ, 40 салтака тыткăна тата вăрçă материалĕсене чылай туртса илнĕ. Çав районрах республиканĕцсем чылай высотасене йышăнна.

Виљйа дел Рио районĕнче республикă чаçĕсем чылай пунктсене йышăнна. Пăлхавçăсем, пысăк çухатусем туса, ултă сехет хушшинием усăсăр вăрçнă.

Çентăберĕн 23-мĕшĕнче фашиссен авиацийĕ Аљкой хули çине (Аликанте провинцинче) бомбăсем пăрахнă. Темиçе бомбă госпитаљ çине тивнĕ. 31 çурта ишĕлтерсе антарнă. Вилнисем 20 çын ытла тата аманнисем 100 çын ытла шутланаççĕ.

(ТАСС).

Гастроljсем

Чăваш АССР халăх пултарулăх çурчĕн тăвата естрада-концерт бригади çак кунсенче республикăри районсем тăрăх гастрољсене тухса кайрĕç.

Бригадăсен гастролĕсем. пĕр уйăх хушши пыраççĕ, вĕсем 11 районра пулаççĕ.

Пулни-иртнисем

Çентăберĕн 16-мĕшĕнче, касхине Тӳрхан вăрманпромхоз складĕнче вут тухнă. Складра пулнă 180 тоннă мучала (курăс) çунса кайнă.

Вут тухнă вăхăтра складра хуралçă пулнă М, В, Первова арĕсленĕ.

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНĂВ.

Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссариатне

ĔÇСЕНЕ ПĂХАКАНĔ

васкавлă кирлĕ

Кадр ен çекретарĕнчен ыйтса пĕлмеле.

Чăвашкинотреста

Шупашкарта тата районсенче ĕçлеме

бухгалтĕрсемпе счетоводсем

КИРЛĔ

Аслă бухгалтĕртан ыйтса пĕлмеле.

Адрес: ул. Р. Люксембург, 11, Кинотрест.

ВОЛГОСТРОЙ

Шыв çулĕсене реконструкцилемели сталинла план тăрăх, пирĕн çĕршывра гидротехникă строитĕлстви калама çук вайлăн саралнă. Вăл планра електричĕствăн йӳнĕ вăйне илме, Заволжйĕри типĕ çĕрсене шăварма тата Атăл тăрăх пăрахутсем çӳрессине лайăхлатма Аталан питĕ пысăк шыв ресурсисемпе усă курма палăртнă пройект тĕп вырăн йышăнать. Ку задачă Атăл çинче сакăр гидроузĕл, урăхла каласан— гидроелектростанцисемлĕ тата пăрахутсене иртсе çӳреме май паракан шљузсемлĕ пĕвесем тунипе пурнăçа кĕрет: вăл—Иванкăвăри (Мускав — Атăл каналĕн пуçламĕше), Угличри, Рыбинскри, Васильĕвскри (Горькирен çӳлерех), Шупашкарти, Куйбышеври, Камышăнри тата Нижневолжскри (Сталинград патĕнче) гидроузĕлсем. Кусемсĕр пуçне тата Атăла йухса кĕрекен пысăк йуханшывсенче те—Ока тата Камă—гидроузĕлсем тума палăртаççĕ.

Атăл çинче тата Окапа Кама шывĕсем çинче тума палăртнă мĕнпур гидроузĕлсен пĕтĕм хăвачĕ 10 мĕлйун киловатран иртмеле; çулталăкра вĕсем 55 мĕлйард киловат-сехет електроенерги памала — çакă вăл Германи, Франци, Англи, Итали пек уйрăмăн илнĕ çĕршывсенчи пĕтĕм електростанцисем пĕтĕмпе туса кăларакан електроенерги чухлĕ пулать.

„Аслă Атăл" пройектне пурнăçа кĕртни пирĕн çĕршыв варринчи питĕ пысăк шыв çулĕсене пĕрлештерме май парать. Мускавпа Атăла Мускав — Атăл каналĕ çыхăнтарса тăрать. Малашне Атăл Днепрпа Ока шывĕн притокĕсем тата Днепр порогĕсем урлă пĕрлешĕнмеле. Дон шывĕпе Атăла Атăл—Дон канал çыхăнтарĕ, Мариински шыв çистемине реконструкци тунă хыççăн, вырăссен аслă йуханшывĕ тарăн шывсемлĕ çулпа—Балти тинĕсĕпе (апла пулсан Ленинградпа та) тата Шурă тинĕспе çыхăнмала пулать.

Çапла вара, Совет Сойузĕнчи пилĕк тинĕсĕн—Балти, Шурă, Хура, Азов тата Каçпи—порчĕсем пысăк грузлă суднăсене çӳреме майсем паракан шыв çулĕсемпе çыхăнса тăмала пулаççĕ.

Атăл çинче тарăн шыв çулĕ тăвас задачăна пурнăçа кĕртнĕ ĕнтĕ.

Мускав—Атăл каналĕн пуçĕнче тăракан узĕла—Иванкăвă йалĕ патĕнчи пĕрремĕш узĕла туса пĕтерне.

Иванкăвă водохранилищинчи Атăл шывĕсем столицăри водопровода йухса кĕреççĕ. Иванкăвăри гидроелектростанцин 30 пин киловат вăйлă турбинисем пĕр çулталăк хушши ĕнтĕ Мосенерго ваљљи електричĕства токĕ парса тăраççĕ. Углич тата Рыбинск гидроузĕлĕсенче те ĕçсем вайлăн саралса пыраççĕ. Ку стройкăна „Волгострой" теççĕ.

„Волгострой"—Камăран пуçласа Иванкăвăри пĕве патне çитичченхи 1500 километр вăрăмĕш Атăл шывне реконструкцилемели плана пурнăçа кĕртет.

Углич тата Рыбинск гидроузĕлĕсене 1935 çул вĕçĕнче тума пуçланă. Углич узĕлне Углич хулинчен кăшт çӳлерех вырăнта тăваççĕ. Унта—çĕр купаласа тата бетонран тунă пĕвесем, пăрахутсене иртĕрмели шљузсем, дамбăсем тата 110 пин киловат вăйлă гидроелектростанци кĕрет. Углич пĕви Атăл шывне 12 метр çӳле хăпартать. Вăл 221 тваткал километр талккăшлĕ водохранилищĕ тăвать.

Рыбинск узĕлне Рыбинск хули патĕнче тăваççĕ. Кунта—çĕр купаласа тата бетонран пĕвесем, шљузсем тата дамбăсем тăваççĕ. Кунти пĕве Атăл шывне 18 метр çӳле хăпартса йарать.

Шексна йуханшывĕ çинче, вăл Атăла йухса кĕнĕ вырăнта, хупă пĕве, дамбăсем тата 330 пин киловат вăйлă гидроелектростанци тăваççĕ.

Рыбинск патĕнчи Атăл тата Шексна пĕвисем 4500 тваткал километр талккăшлĕ питĕ пысăк водохранилищĕ тăваççĕ.

Çакă вăл тĕнчери водохранилищăсенчен чи пысăкки пулать.

Кунсăр пуçне тата, „Волгострой", пĕвесем хĕснипе, чукунçулсене тата кĕперсене урăхлатса тăвать. Атăл, Сура тата Шексна шывĕсем урлă тунă тватă кĕпер, прољотсен пысăкĕшĕпе, тĕнчери строитĕлствă техникишĕн паллă чи пысăк чукунçул кĕперĕсен шутĕнче тăраççĕ.

„Волгострой" мĕн таран пысăк ĕçсем туни çинчен тата вăл ĕçсем мĕнле пысăкки çинчен çак цифрăсем питĕ лайăх каласа параççĕ. Икĕ гидроузĕлĕнче те 50 мĕлйун кубла метр çĕр чавса кăлармала—çакă вăл Шурă тинĕспе Балти тинĕс каналĕ стройкинчен икĕ хут ытла пулать. Бетон купалас йенчен илсен вара, ăна Шурă тинĕспе Балти тинĕс канал стройкинче купаланинчен 5 хут ытла тата Днепростройра купаланинчен 2.5 хут ытла купаламала.

Атăл çинче Углич тата Рыбинск патĕнче гидротехникăлă узĕлсем тунă хыççăн, Атăл пăрахучĕсем Углич тата Рыбинск витĕр çăмăллăн иртсе, малала канал тăрăх Мускава кайĕç. Мариинск çистемипе çурçĕр йенчен килекен пăрахутсем те çавнăшкалах ирĕклĕ çулпа Мускава кайма пултарĕç.

Çак майпа Ленинградран Мускава çитиччĕнхи шыв çулĕ 1100 километр чухлĕ кĕскелет.

Углич тата Рыбинск гидроузĕлĕсене пĕтĕмĕшпех туса пĕтерсен, Мускав тăрăн шыв çулĕпе виçĕ тинĕспе—Каçпи, Шурă тата Балти тинĕсĕсемпе çыхăнса тăракан пулать.

Кунсăр пуçне тата, пĕтĕмĕшпе 440 пин киловатлă „Волгостройăн" гидростанцисем Мускав, Иваново, Йарослављ тата Горький облăçĕнчи предприйатисене çулталăкне 1,3 мĕлйард киловат-сехет йӳнĕ електроенерги парĕç.

Ку енерги никĕсĕ çинче татах та пысăк промышлĕнăçлă предприйатисем, çĕнĕ хуласем ӳсĕç. Тури Атăл районĕсен економики улăшăнса кайĕ.

„Волгострой" çинче пысăк тата пĕчĕк механисăмсем темиçе пиншерĕн ĕçлеççĕ.

Алăпа тума питĕ йăвăр ĕçсене — çĕр чавмали тата купаламали ĕçсене, бетонлă ĕçсене—кунта йăлтах пекех механизациленĕ.

Çав тери чаплă сооруженисене тумали ĕçсем талккăшпех пыраççĕ. Вĕсенчен нумайăшĕсен контурисем те курăнаççĕ ĕнтĕ.

Октăберти Социалисăмла Аслă революци 21 çул тултарнă тĕле Рыбинск патĕнчи бетон пĕвене монтаж тума тытăнаççĕ.

1939 çулта çулла Рыбинск тата Углич патĕнчи Атăл шывне çĕр пĕвисем пӳлсе илĕç, вара Атăлăн бољшевиксен ирĕкне пăхăнса, хăйĕн йухăмне тепĕр хут урăхлатмала пулĕ.

1940 çулти çуркуннерен пуçласа çав тери пысăк Рыбинск водохранилищине шыв тултарма тытăнаççĕ.

Строитĕлствă пысăк хăвăртлăхсемпе пырать.

Тата темиçе çултан „Волгостройăн" чаплă сооружениĕсем, социалисăмла хуçалăх гиганчĕсен ретне кĕрсе, бољшевиксен аслă партийĕ тата аслă Сталин йертсе пыракан чечекленсе пыракан социалисăм çĕршывĕ ваљљи ĕçлеме тытăнĕç.

(ТАСС).

„Союзкинопрокатăн" Чăваш республикĕнчи уйрамĕ Чăваш республикĕнчи екрăнсем çине Ленинградри Ленин орденлĕ „Ленфиљм" киностудийĕ 1938 çулта ӳкернĕ

„ПРОФЕССОР МАМЛОК"

йатлă

саслă илемлĕ пысăк фиљм

кăларать

ССРС ФИНАНС ХАЛĂХ КОМИССАРИАЧĔН

ПĔТĔМ СОЙУЗРИ ЗАОЧНĂ ВĔРЕНМЕЛИ

ФИНАНСПА ЕКОНОМИКĂ ИНСТИТУЧĔ

вĕренме илесси çинчен пĕлтерет

Институтран вĕренсе тухса государствă екзамĕнĕсене панисем диплом тата стационарлă финанспа економикă институчĕсенчен тухнисен мĕнпур прависене илеççĕ.

Институтра тӳлевсĕрех вĕрентеççĕ. Тăватă çул çурă вĕренмеле.

Института 17 çултан иртнисене, вăтам шкулран, техникумран тата рабфакран вĕренсе тухнисене тата екстерн йĕркипе вăтам шкулран вĕренсе тухни çинчен аттестат илнисене илеççĕ.

Института кĕрекенсем аслă шкулсене кĕмелли йĕркесемпе килĕшӳлĕн испытани тытаççĕ.

Института кĕме ыйтса зайăвленисене институт дирекцийĕ йачĕпе çак адресла йамалла: „Москва, центр, улица Куйбышева, 9, Ве Казанский учебно-консультационный пункт, ул. К. Маркса, 43, 4-й этаж, комната № 61, К. Ф. Э. И. им. В. В. Куйбышева. Кунтах проспект, зайăвлени формине тата ыйтта справкăсене те илме пулать.

3—2

„Чăваш Коммунĕ" [illegible] уйăха 2 т. 50 пус, 3 уйăха 7 т. 50 п., 6 уйăха 15 т., çулталăка 30 тенкĕ. Подпискăна сыхăну уйрăмĕсем, письмоносецсем йышăнаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 502

Гор. Чебоксары, типография № 1 заказ № 711, [illegible]